чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

137 /26543/№ Юн кун, 2014, утă (июль), 16 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче кăларнă 102-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн Чăваш Республикин Потребительсен обществисен союзĕн председательне **Валерий Михайлович ПАВЛОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМӖНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе наградăланă;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн «Патăрьел районĕн культурăпа кану центрĕ» автономи учрежденийĕн директорне **Алевтина Геннадьевна ОВЧИННИКОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

педагогикăри тата воспитани ĕçĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан «Уйрăм предметсене тĕплĕн вĕрентекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 49-мĕш вăтам шкул» бюджет учрежденийĕн директорне **Герман Николаевич ИЛЬИНА,** Раççей Федерацийĕн халăх вĕрентĕвĕн тата наука ĕçченĕсен профсоюзĕн Шупашкар хулинчи организацийĕн председательне **Зоя Александровна ИЛЬИНАНА,** федерацин аслă професси вĕрентĕвĕн «И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ» патшалăх бюджет учрежденийĕн кафедра профессорне, педагогика наукисен докторне **Надежда Ивановна МЕРЛИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сферăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи «Водоканал» акционерсен хупă обществин водопровод сечĕсемпе сооруженисен цехĕн аслă мастерне **Валерий Николаевич ИВАНОВА,** Шупашкар хулинчи тулли мар яваплă «Монтажспецстрой» обществăн строительствăпа монтаж участокĕн ĕçсен производительне **Владимир Дмитриевич ИЛЬИНА,** тулли мар яваплă «Тăвай çăкăрĕ» обществăн генеральнăй директорĕн çумне **Татьяна Виталиевна ОБАСЬКИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕКЕН СФЕРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

транспортри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Пĕтĕм Раççейри автомобилистсен обществин Улатăр хулинчи уйрăмĕ» общество организацийĕн председательне **Евгений Иннокентьевич ГАЛАКТИОНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТРАНСПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

физкультурăпа спорта аталантарассинчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Чăваш Республикин Фитнес-аэробика федерацийĕ» общество организацийĕн пĕрремĕш президентне **Оксана Юрьевна ВЕРБИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРĂПА СПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

Кун йĕркинче – ял хуçалăх ыйтăвĕсем

Утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич Раççей ял хуçалăх министрĕпе Николай Федоровпа округри агропромышленноç комплексне аталантарас ыйтусемпе канашлу ирттернĕ. Унта регионсен пуçлăхĕсем, отрасльти аталану институчĕсен, çавăн пекех пысăк предприятисен представителĕсем хутшăннă.

Канашлăва уçнă май Михаил Бабич юлашки çулсенче отрасльти лару-тăру чылай лайăхланнине палăртнă. Анчах чăрмавсем те çук мар. Çав шутра – типĕ çанталăк, пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ округри регионсем çумăрсăр нушаланаççĕ. Виçĕм çул 6 региона типĕ çанталăк тăнă, пĕлтĕр – 9 региона.

Çавăн пекех ял хуçалăх предприятийĕсем кредитсен тыткăнне лекни те ура хурать. Производствăна çĕнетмелли проектсене пурнăçлама илнĕ инвестици кредичĕсем тĕлĕшпе процент виçине субсидилес ыйтăва татса паманни ĕç-пуçа пушшех йывăрлатать.

Сăмах илнĕ май ял хуçалăх министрĕ Николай Федоров патшалăх пулăшăвĕн шучĕпе уйăракан укçана ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларакансем патне çитерессипе çыхăннă çивĕч ыйтăва çĕкленĕ. Округри регионсем валли уйăрнă 26 млрд тенкĕрен 14 млрд тенкĕпе кăна усă курнă.

Канашлăва хутшăннисем тĕрлĕ ыйтупа тухса калаçнă: предприятисене климат тата биологи условийĕсене кура патшалăх енчен пулăшасси, федераци харпăрлăхĕнчи ял хуçалăх çĕрĕсемпе усă курасси, кредитсемпе усă курмалли меллĕ условисем йĕркелесси, ялăн социаллă инфратытăмне аталантарасси, отрасль валли кадрсем хатĕрлесси.

Канашлу хыççăн полпред тата регионсен пуçлăхĕсем Эрĕнпур облаçĕнчи «Вишневский» селекципе гибрид центрĕнче пулнă, ăратлă сысна çитĕнтерекен предприятин ăнăçлă ĕçĕпе паллашнă.

■ **А.ПАВЛОВ**

Паянхи пурнăç

Хӳтлĕх шыраса – Чăваш Ене

Сар.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

Иртнĕ вырсарни кун çĕрле Чăваш Республикине Украинăри Донецк тата Луганск облаçĕсенчен 71 çын килсе çитнĕ, çав шутран ытларахăшĕ – ачасемпе хĕрарăмсем. Вĕсене "Контур" заводăн никĕсĕ çинче йĕркеленĕ вăхăтлăх пунктра вырнаçтарнă.

Тăван тăрăхĕнчен тарса Чăваш Ене маларах килнĕ çынсемпе /вĕсенчен темиçешĕнпе куçа-куçăн курса калаçнăччĕ/ танлаштарсан ку ушкăн пирĕн республика пирки нимĕн те пĕлмест: вĕсен кунта тăванĕсем те, тус-юлташ та çук. Çавăнпахтăр инçетрен çитнĕскерсем пăлханаççĕ. Шăп çавăн пеккисем валли вăхăтлăх пунктра ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин психологи пулăшăвĕн служби ĕçлет. Унтах тухтăрсен ушкăнĕ медицина тĕрĕслевĕ ирттерет. Миграци службин ĕçченĕсем те килнĕ: çынсене асăннă пунктрах йышăнаççĕ, кирлĕ документсене вырăнтах хатĕрлеççĕ. Пурăнакан яланхи вырăна пăрахса хăварнăскерсене Чăваш Ен влаç органĕсем куллен кирлĕ япаласемпе тивĕçтерме тăрăшаççĕ: тумтирпе, гигиена хатĕрĕсемпе, эмелсемпе... Инçетрен çитнĕскерсене кунне виçĕ хут вĕри апат çитереççĕ.

Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова Украина гражданĕсене вырнаçтарнă пӳлĕмсенче пулса курчĕ, вĕсем хăйсене мĕнле туйнине, çывăх вăхăтра тата мĕн кирлине ыйтса пĕлчĕ. Донецк тата Луганск облаçĕсенче пурăннăскерсем малтан Ростов облаçĕнчи вăхăтлăх лагерьте чарăннă, унтан вĕсене Чăваш Ене илсе килнĕ. "Тавах сире пире ăшшăн йышăннăшăн. Эпир палаткăсенчех çывăрма тивет тесе куляннăччĕ, ачасем пĕчĕк-çке, вĕсем чирлесрен хăратпăр. Кунти условисем вара чаплă", – пĕлтерчĕç министра хĕрарăмсем.

Пепкесенчен чи пĕчĕкки – 5 уйăхра. Унăн амăшĕ Лариса хăйсем пурăннă Алчевск хулинче /Луганск облаçĕ/ тата çывăхри территорире мĕнлерех лару-тăру хуçаланнипе паллаштарчĕ: "Юнашар хулара вут-хĕм сирпĕннĕ чухне йăлтах илтрĕмĕр-куртăмăр – питĕ хăрушă, унта вара – манăн аттепе анне. Масар çине бомба пăрахрĕç – территори çăрăлчăка çаврăнчĕ. Унтан çак кĕмсĕртетӳ пирĕн пата та çитрĕ: малтан пĕр снаряд вĕçсе килчĕ, унтан тепри, виççĕмĕш... Йĕритавра – тĕтĕм-сĕрĕм, шăв-шав... Ывăлăм çывăраймасть, макăрать те макăрать. Çавăнпа çĕр-шывран тухса кайма йышăнтăмăр. Хамăр мĕнпе пулнă – çавăнпах çула тухма тиврĕ. Сумкăсене те йĕркеллĕ пуçтарса ĕлкĕреймерĕмĕр. Чикĕ урлă каçсан та пенĕ сасăсем тахçанччен илтĕнчĕç", – çамрăк хĕрарăм каласа кăтартнине илтсен çан-çурăм тăрăх сивĕ хум чупса иртрĕ. Вăл хăйсемпе пĕрле упăшкине автобуса лартманшăн пăшăрханать, арçынсене тăван тăрăхрах юлма хушнă иккен. Унăн ашшĕ-амăшĕ те Украинăрах юлнă. Лариса ачине пĕччен пăхмашкăн питĕ кансĕррине, мăшăрĕ пепки валли апат хатĕрлеме тата ытти ĕçе тума пулăшнине палăртать. "Ывăлăм çул çинче макăрчĕ те, кулчĕ те, хăсрĕ те, вылярĕ те – пĕтĕмĕшле илсен хытах аптăрамарĕ. Юрать-ха, манпа пĕрле аппапа тантăшăм çула тухрĕç, вĕсем май килнĕ таран пулăшрĕç. Анчах хăйсен те ачисем пур, вĕсене те пăхмалла, – чун ыратăвне уçрĕ хĕрарăм. – Çывăх çыннăмсем патне шăнкăравласчĕ, вĕсем хăйсене мĕнле туйнине ыйтса пĕлесчĕ, пирĕн пурте йĕркеллех иккенне систересчĕ". Çакна та палăртса хăварар: Украина çыннисене вăхăтлăха вырнаçтарнă пунктра тунти кунах сим-карттăсемпе тивĕçтерме пуçларĕç.

Хăйсем пурăнакан вырăна пăрахса хăварнисен хушшинче арçын сахал. Вĕсенчен пĕри – Алчевск хулинчи Вадим. Вăл Чăваш Ене виçĕ ачипе килнĕ: кĕçĕнни – çулталăк та тăватă уйăхра, асли – 12-ре. Унăн мăшăрĕ медицина ĕçченĕ пулнă май госпитальте вăй хурать, ополчени салтакĕсене пулăшать. "Аманнисене иккĕн çеç сиплеççĕ, çавăнпа арăм унтах юлчĕ", – пĕлтерчĕ Вадим кĕçĕн ывăлне хыттăнрах ыталанă май. Арçын кунта ахаль ларасшăн мар, хăвăртрах ĕçлеме вырнаçасшăн. "Мана хамăн специальноçпах – промышленноç альпинисчĕ – вăй хума май пуррине пĕлтерчĕç", – терĕ Вадим.

Украинăран тарса килнисем Алла Самойлова министра хăйсен ĕçлес килнине пĕлтерчĕç. Вĕсем валли Чăваш Енри ĕçлев служби вакансисен ятарлă банкне хатĕрленĕ: унта пĕтĕмпе 1503 ĕç вырăнĕ, çав шутран 651-шĕнче пурăнмалли кĕтеспе те тивĕçтерĕç. Паллах, хĕрарăмсен малтан ачисене вырнаçтармалла. Пĕчĕкскерсем валли мини-садик йĕркелĕç. "Сирĕн валли паянах ача кравачĕсем, кӳмесем, тумтирпе атă-пушмак илсе килĕç. Кирлĕ тĕк укçа-тенкĕ енчен те пулăшăпăр. Ан кулянăр. Сире Чăваш Енре хăтлă пултăр тесе хамăртан мĕн килнине йăлтах тăвăпăр", – терĕ А.Самойлова. Вăл ку пунктра вăхăтлăх хӳтлĕх тупнисемпе кашнинпе уйрăммăн ĕçлессине, пĕрисене – çемьесене, теприсене социаллă центрсене вырнаçтарассине пĕлтерчĕ.

Донецк тата Луганск облаçĕсенчен тарса килнисем хăйсене Чăваш Енре килĕшнине, кунти çынсем ырă кăмăллă та тараватлă пулнине пĕлтерчĕç. Чылайăшĕ пирĕн республикăра яланлăхах юлма хирĕç маррине те систерчĕ.

Украина гражданĕсене хăйсен çемйисенче вырнаçтарма хатĕр çынсене ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине çак телефонсемпе шăнкăравлама ыйтаççĕ: 26-13-49, 62-13-60.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Вырмана тухнă

Тунти кун Елчĕк районĕнчи «Яманчурино» тата «Прогресс» обществăсенче вырмана тухнă. Икĕ кунта пăрçапа кĕрхи культурăсене пурĕ 100 гектар ытла вырнă.

«Прогресс» комбайнерĕ Владимир Воронцов ертсе пыракан ушкăн 28 гектар пăрça çулнă, – пĕлтерчĕ телефонпа Елчĕк район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Петр Тремасов. – Çак кунсенче ытти хуçалăх техники те хире тухĕ».

Ĕнер ял хуçалăхĕн Чăваш ăслăлăх тĕпчев институчĕ те вырмана пуçаннă. Андрей Иванов «Вектор» комбайнпа кĕрхи тулă (28 гектар) вырнă. Алексей Ильин водитель ăна йĕтеме турттарать. Любовь Воробьева, Андрей Ермолаев тата Наталия Аркадьева техник тыр-пула йĕтем çинче йышăнаççĕ. Пурĕ 26,6 тонна тырă тĕшĕленĕ. Тухăç кашни гектартан 38 центнер.

Ю.МИХАЙЛОВ.

Атăльял – 800 çулта

Çак кунсенче Шупашкар районĕнчи Атăльялсем ял кунне паллă тунă. Уява ял никĕсленнĕренпе 800 çул çитнине халаллăнă.

Уяв пултарулăх ушкăнĕсем пĕве хĕрринчен пуçласа уçланкă патне çитиччен юрласа-ташласа утнинчен пуçланнă. Унтах пысăк концерт иртнĕ. Ял халăхĕпе хăнасене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Анатолий Князев, ЧР Пенсионерсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Валерий Сапожников, Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ Валерий Клементьев тата ыттисем саламланă. Сумлă хăнасемех ялăн чи пултаруллă та хастар çыннисене тĕрлĕ парне-дипломпа чысланă. Ял артисчĕсем Атăльялăн кун-çулĕпе паллаштаракан тата паянхи пурнăçне сăнлакан спектакль сыпăкне кăтартнă. Уяври чи пĕлтерĕшлĕ пулăмсенчен пĕри – ку тăрăхра этноял уçни. Авалхи япаласем вырăн тупнă, халăхăн ĕлĕкхи йăли-йĕркине упракан çурта чылайăшĕ кĕрсе тухнă.

А.ПЕТРОВ.

"Çемьепе шанчăклăх" паркне çитсе курнă

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче Етĕрне районĕнчи хĕрсемпе каччăсем Мари Республикинчи Туçи Çармăс районĕнчи Еласы салине, унти Çемье телейĕн паркне çитсе курнă.

Ăна ялти çамрăк мăшăрсен пуçарăвĕпе кĕске вăхăтра хута янă-мĕн. Халĕ вăл – пĕр-пĕрне юратакансемшĕн юратнă вырăн. Çырăннă хыççăн чăн малтан Маринăпа Евгений Беловсен çемйи парка кĕме тивĕçнĕ. Венчет çĕрри тăхăннă хĕрпе каччă арçынпа хĕрарăм фонтанĕ патне пынă, телейлĕ пулма унтан пил ыйтнă. Чул – çирĕплĕх, тӳсĕмлĕх, вăй-хал палли. Шыв вара çемçелĕхпе, тасалăхпа, çепĕçлĕхпе çыхăннă. Вăл – этемлĕхĕн черчен çуррийĕн палли.

Асăннă паркра "Пуянлăх курки" фонтан та пур. Çамрăк мăшăр унта тимĕр укçа пăрахнă. Унтан кагча каякан хĕрĕн беседкине çул тытнă. Унтан Телей çулĕ мăшăра Сывлăх çалĕ патне илсе çитернĕ. Пике таса шыв ăсса савнă çыннине ĕçтернĕ. Унтан вĕсем Шанчăклăх йывăçĕ патне çул тытнă, турат çине çăраççи çакнă, уççине шыва пăрахнă.

Р.ВОЛЬСКАЯ.

Вăрнар футболисчĕсем – виççĕмĕш

Шупашкарти «Олимпийский» стадионта 12-13 çулсенчи çамрăк футболистсен Пĕтĕм Раççейри «Сăран мечĕк» турнирĕн Атăлçи округĕнчи тапхăрĕ вĕçленнĕ.

Мари, Мордва, Тутар, Удмурт республикисенчен, Киров, Чул хула, Пенза, Самар, Сарă ту, Чĕмпĕр облаçĕнчен килнĕ 11 команда финала тухассишĕн ăмăртнă. Пысăк ăмăртура Чăваш Ен чысне Вăрнарти «Химик-Август» команда (тренерĕ – Александр Строганов) хӳтĕленĕ. Пирĕн ентешсем юлашки вăйăра Пенза командипе тĕл пулнă, вĕсене 1:0 шутпа çĕнтерсе пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă. Гол хуçи – Артур Порфирьев, вăлах – тапăнса вылякан чи пултаруллă спортсмен. Палăртмалла: Чăваш Ен команди «Сăран мечĕк» турнирта пĕрремĕш хут малти вырăнта йышăннă. Ăмăрту çĕнтерӳçи ятне вара Мордва Республикинчи «Рузаевка» команди тивĕçнĕ, çамрăк футболистсем Чул хулари «Звездана» 3:0 шутпа парăнтарнă. Чемпионсем çурла уйăхĕнче Екатеринбургра иртекен финал ăмăртăвне хутшăнĕç.

А.МИХАЙЛОВ.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

"ХĔРЛĔ АВТАН" ХĔРХЕНӲСĔР

Республикăри МЧС ĕçченĕсем çынсем пирус туртнă чухне асăрханусăр пулнăран тухакан пушарсен шучĕ ӳснине пăшăрханса пĕлтереççĕ. Туртакансенчен ытларахăшĕ, паллах, ӳсĕр пулнă. Çулталăк пуçланнăранпа çак сăлтавпа 100-е яхăн пушар тухнă, 32 çын вилнĕ, мăкăрлантарма юратакансенчен 23-шĕ суранланнă. "Хĕрлĕ автан" 7 млн ытла тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Танлаштарма: 2013 çулта асăннă сăлтава пула вутçулăм 88 хут алхаснă, çав синкерсенче 28 çын пурнăçран уйрăлнă, 22-ĕн сиенленнĕ.

Çакнашкал инкек иртнĕ эрнере Çĕмĕрле районĕнчи Хĕрлĕ Октябрь поселокĕнчи пурăнмалли пĕр çуртра пулнă – пĕлтерет Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пресс-служби. Çăлавçăсене кӳршисем чĕнсе илнĕ. Чи малтан вырăнти ирĕклĕ пушарнăйсем хăйсен техникипе килсе çитнĕ, унтан – профессионал брандмейстерсем. Пĕрлехи вăйпа вута сӳнтернĕ, çапах çулăм çурт тăррине тата стенасене, пурлăха сиен кӳме ĕлкĕрнĕ. Юратьха, кил хуçи шар курман. Ял çыннисем каланă тăрăх – вăл пĕчченех пурăнать-мĕн, сигарет туртаканскер "хаяррине" тăтăшах сыпкалать. Тепĕр тĕслĕх. Шăмăршă районĕнчи Вырăс Чукалĕнчи арçын пĕррехинче пирус тĕпне сӳнтермесĕрех çывăрса кайнă та... текех вăранайман. Кӳршисем унăн пӳрчĕ çуннине асăрхасан пушарнăйсене чĕнсе илнĕ-ха, анчах кил хуçине çăлма май килмен. Нумаях пулмасть кун пек инкек Çĕнĕ Шупашкарта та тухнă. Икĕ арçын уяв паллă тунă. Ӳсĕрскерсем пирус туртнă, унăн тĕпĕ çемçе сĕтел-пукан çине ӳкнĕ те "хĕрлĕ автан" ташлама пуçланă. Арçынсем иккĕшĕ те тĕтĕмсĕрĕмпе чыхăнса вилнĕ. Шел...

Çапла, пирус туртни сывлăха сиен кӳнипе пĕрлех тĕрлĕ инкек патне илсе çитерет. Усал çак йăлапа туслисем тепĕр чухне урама тухмасăрах, килĕнчех – е пӳлĕм тăрăх çӳресе, е сĕтел хушшинче, е кресло-диван çине меллĕн вырнаçса ларса, е вырăн çине выртса – мăкăрлантараççĕ. Хăшĕ-пĕри эрехсăра ĕçнĕ хыççăн çапла хăтланать. Ӳсĕрскер тимлĕхе çухатать, хушăран хăй мĕн тунине те лайăх ăнланмасть, çывăрса каякан та пур. Унăн аллинчи пирус вара урайĕнчи палас е вырăн çине ӳксе йăсăрланма пуçлать, тĕтĕм-сĕрĕм тухса тулать. Инкекшĕн айăпли тата унпа пĕрле пурăнакансем çак вăхăтра çывăраççĕ, çавăнпа вăранаймаççĕ те, çăлăнаймаççĕ те.

Республикăри чрезвычайлă лару-тăрупа граждан оборонин ĕçĕсен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров каланă тăрăх – вут-çулăмра вилекенсен пысăк пайĕ ӳсĕр чухне пирус туртнăран пурнăçпа сыв пуллашать. Çакнашкал туртăм пирĕн республикăра çеç мар, Раççейĕпех палăрать иккен. Республикăн "тĕп çăлавçин" шухăшĕпе – ытларах чухне пĕччен арçынсем, пурнăç йĕркине тĕрĕс мар тытса пыракансем, шар кураççĕ. Ун пеккисем патне эрех ĕçес текенсем пуçтарăнаççĕ, черкке хыççăн черкке пушатнă хыççăн нумайăшĕ пӳртĕнчех пирус туртать, çывăрса каять... Чи кулянтаракан – тепĕр чухне вĕсене пула ним айăпсăр çынсем инкек тӳсни: çулăм пĕрре çеç мар, темиçе хут та йĕркелет. Вăл ăнăçсăр çемьесем, пĕччен ватăсем тата эрех-сăрапа иртĕхекен граждансем мĕнле пурăннине тĕплĕн сăнаса тăма тăрăшать. Комисси çынсем килĕнче йăлари электрохатĕрсемпе, газ оборудованийĕпе мĕнлерех усă курнине, кăмакасемпе мăрьесен, мунчасен тăрăмне те пăхать. Çавăнпа ятарлă ушкăна киле кĕртме хăрамалла мар: специалистсем çитменлĕхсене тӳрех асăрхаççĕ, вĕсене мĕнле пĕтермеллине те ăнлантараççĕ.

Çапах общество комиссине çеç кĕтсе ларни вырăнсăр. Эрех-сăра ĕçме юратакан тата пирус туртакан çынпа кӳршисен те чуна уçса каласмалла, усал йăла мĕн патне илсе çитерме пултарнине ăнлантармалла. Хăшĕсем формăллă е пакунлă специалистсен сĕнĕвĕсене мар, куллен куракан пĕлĕшĕсен сăмахне ăса хываççĕ. Çавăнпа "Ку манăн ĕç мар, ятарлă службăсен", – теме васкамалла мар. Çакă та – хамăр хăрушсăрлăхшăн тăрăшниех.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 30, çĕрле 20 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 753 мм, сывлăшри нӳрĕк 33 процент.

Кун тăршшĕ 17 сехет те 1 минут.

Ыран пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать, вырăн-вырăн асăлтиллĕ çумăр çăвать. Çил çурçĕр-хĕвел тухăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 751 мм, сывлăшри нӳрĕк 70 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 58 минут.

Чыслав

"Чăн юрату упрать пире, чăвашсене..."

Сар.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

Правительство ҫуртĕнче ĕнер Пĕтĕм Раҫҫейри Ҫемье, юрату тата шанăҫ кунĕ ячĕпе Чăваш Енĕн ятлă-сумлă ҫыннисене Раҫҫей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин патшалăх наградисемпе чысларĕҫ.

Уяв мероприятине пухăннă мăшăрсенчен кашниех телейлĕ те пуян: вĕсем чылай ҫул пĕрле пурăнса юратăва упраса, ҫемье ăшшине сыхласа хăварма пултарнă, пархатарлă ывăл-хĕр ҫуратса халăха юрăхлă ҫитĕнтернĕ.

"Сире Раҫҫей тата Чăваш Ен наградисемпе чысламашкăн мана уйрăмах кăмăллă. Ачасене пăхса ӳстересси, таса юратăва упраса хăварасси – чăнчăн телей кăна мар, пысăк явапăр та, – терĕ Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев савăнăҫлă мероприятие уҫнă май. – Ҫемье пархатарĕ яланах хисеппе пулнă. Паха ҫак ене малашне те упраса хăвармалла пирĕн. Чăваш халăхне ҫутта кăларнă Аслă Вĕрентекенĕмĕр Иван Яковлев ҫемье пурнăҫри йывăрлăхсене ҫĕнтерме пулăшать тесе ахальтен каламан. Ҫакна хăвăр тĕслĕхĕрпе ҫирĕплететĕр. Тавах сире ҫакăншăн".

Республика ертӳлĕхĕ ҫемье институтне ҫирĕплетессине тивĕҫлипе хаклать. Нумай ачаллă ҫемьесене патшалăх тĕрлĕ енлĕн пулăшать: амăшĕн капиталĕпе тивĕҫтерет, ҫĕр лаптăкĕ тӳлевсĕр уйăрать, уйăхсерен пособи парать тата ытти те. Ахальтен мар-тăр иртнĕ ҫулта йышлă ҫемьесен шучĕ 10 процент ӳснĕ. Демографи лару-тăрăвĕ ырă улшăнупа савăнтарать.

"Наградăна тивĕҫнисенчен чылайăшĕ йышлă ача ҫитĕннĕ. Чун-чĕре ăшшине тĕпренчĕкĕсене парнеленĕшĕн вĕсене чĕререн тав тăватăп. Залра ларакансен хушшинче паян Улатăр хулинчи чиркӳ настоятелĕпе Андрей Николаевичпа Ирина Васильевна псаломщик та пур. Савенковсем венчете тăнăранпа ҫирĕм ҫул ҫитнĕ. Юратупа тăнăҫлăх хуҫаланакан ҫемьере сакăр ача ҫитĕнет. Сăмах май, йывăр лару-тăрăва лекнĕ хĕрарăмсем валли Андрей атте пуҫарнипе Улатăр чиркĕвĕнче кризис центрĕ йĕркеленĕ, ача кĕтекенсем кунта хӳтлĕх илме пултараҫҫĕ.

Ача сасси янăраса тăракан ҫемье йышлансан малашлăх тăнăҫлă пуласси иккĕлентермест. Сире орден-медаль илнĕ ятпа ăшшăн саламласа юратупа телей сунатăп", – терĕ Михаил Игнатьев наградăсем панă май.

Ачасене тĕрĕс-тĕкел пăхса ҫитĕнтернĕшĕн тата ҫемьен ырă йăли-йĕркине упраса хăвармашкăн сумлă тӳпе хывнăшăн Савенковсене /Улатăр хули/ "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орденпа, Григорьевсене /Ҫĕнĕ Шупашкар хули/, Егоровсене /Сĕнтĕрвăрри районĕ/ Чăваш Ен Пуҫлăхĕ "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орден медалĕпе чысларĕ.

Ҫемье институтне тĕреклетмешкĕн сумлă тӳпе хывнă мăшăрсен пысăк ушкăнĕ Чăваш Республикин наградине – "Юратупа шанăҫшăн" ордена – тивĕҫрĕ. Вĕсен йышĕнче Михаил тата Роза Юхмасем те пулчĕҫ. Хăйсене пысăка хурса хакланӑшăн республика Пуҫлăхне тав тунă май Роза Ивановна ҫак ятпа ҫырнă сăввине вуларĕ. Унта "Чăн юрату упрать пире, чăвашсене" текен йĕрке пур. Чăннипех ҫапла пултăрччĕ, пысăк юратупа ҫуралнă тата чунран кĕтнĕ ҫĕнĕ кайăк пирĕн хутлăхра ҫултан ҫул йышлансах пытăрччĕ. Кун пек чухне эпир чăннипех пуян та телейлĕ тата тĕреклĕ.

Уяв мероприятине ҫавăн пекех Чăваш Ен Пуҫлăхĕн мăшăрĕ Лариса Игнатьева, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ҫумĕсем – Чăваш Ен Пуҫлăхĕн Администрацийĕн ертӳҫи Александр Иванов тата ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, ачасен правине хӳтĕлекен уполномоченнăй Вячеслав Рафинов, Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава хутшăнчĕҫ, чыслава тивĕҫнисене ăшшăн саламласа ырлăх-сывлăх сунчĕҫ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Аслă Ҫĕнтерӳ: 70 ҫул

Салтак тивĕҫĕ ҫăмăл мар

Ҫĕнĕ Ахпӳрт ялĕнче пурăнакан М.Прокопьев 90 ҫулхи юбилейне паллă турĕ. Михаил Прокопьевич – вăрҫă тата педагогика ветеранĕ. Вăл Ленинграда хӳтĕленĕ, Ҫĕнтерӳ ҫулĕ унăн Балти тăрăхĕнчи ҫĕр-шывсем, Польша витĕр Берлина выртнă. Вăрҫăн хаяр та асаплă кунĕсем сывлăхне самаях хавшатнă. Чăтăмлăх, ĕненӳлĕх чунне ҫирĕплетнĕ, пурăнас туйăма вăйлатнă. Сывлăхне сипленĕ хыҫҫăн Хусанти педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. Пилĕк ҫултан тăван тăрăха физикăпа математика учителĕн дипломĕпе таврăннă. Хĕрĕх ҫула яхăн Шаккăл вăтам шкулĕнче ĕҫленĕ. Унăн тăватă вĕренекенĕ ăсчах пулса тăнă, Раҫҫейĕн тĕрлĕ хулинчи аслă вĕренӳ заведенийĕнче студентсене пĕлӳ параҫҫĕ. Вĕсем юратнă вĕрентекенĕ патне тăтăшах килеҫҫĕ. Михаил Прокопьевичăн мăшăрĕ те шкулта ĕҫленĕ, икĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ, икĕ мăнукĕ хăйсен пурнăҫне педагогикăпа ҫыхăнтарнă.

Михаил Прокопьевич ҫамрăклăха, вăрҫăн ҫулăмлă кунĕсене, ун хыҫҫăнхи йывăр вăхăта аса илтерекен сăн ӳкерчĕксене, ҫырусене, ҫырса пынисене типтерлĕ упрать.Куҫ вăйĕ чаксах пынă унăн, вунă ҫул каялла ҫут тĕнчене уншăн яланлăхах хура чаршав карса илнĕ. Халĕ вăл – пĕрремĕш ушкăнри инвалид.

1941 ҫулхи ҫĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче вун ҫиччĕри Мишша юлташĕсемпе пĕрле юлашки экзамен тытнă. Аттестат илме ĕлкĕреймен – вăрҫă пуҫланнă. Салтака кайма ят тухиччен колхозра ĕҫленĕ. 1942 ҫулта ҫурла уйăхĕнче ҫар комиссариатĕнчен чĕнӳ хучĕ килнĕ. Виҫĕ уйăха яхăн кĕҫĕн командирсен курсĕнче вĕреннĕ хыҫҫăн Ленинград ҫывăхĕнче тăракан ҫар чаҫне янă. Хула патне вĕсем Ладога кӳллипе пынă. «Пурнăҫ ҫулĕпе» машинăпа, лавпа апат-ҫимĕҫ, ҫар хатĕрĕ турттарнă. Пирĕн ентеш 55-мĕш армин стрелоксен 196-мĕш дивизине лекнĕ. Вăл Ижор завочĕ ҫывăхĕнче Тосна юхан шывăн пырĕ тĕлĕнче вырнаҫнă. Ҫăвĕпех оборонăра тăнă.

– Ҫав кун нихăҫан та асран тухмасть. Пĕчĕк хăвăртлăхпа пыракан, кузов тулли салтаклă полуторкăна /тонна ҫурă тиекен автомобиль/ ларас терĕм. Вырăн ҫук, мана хăйсен чаҫĕнчен мар тесе тĕртсе хăварчĕҫ. Те турри ҫапла ҫырнă, те ăнсăртлăх пулчĕ: тем вăхăтран куҫ умне тискер ӳкерчĕк тухса тăчĕ – машина шыва кĕрсе кайрĕ те пăр айĕнче ҫухалчĕ. Никам та ҫăлăнаймарĕ – водитель те, салтаксем те. Вĕсен хушшинче эпĕ те пулма пултарнă вĕт-ха! – терĕ те Михаил Прокопьевич вăхăтлăха шăпланчĕ.

Тăшман самолечĕсем бомба тăкнă, снарядсем ҫурăлнă, пульăсем шăхăрнă. Ниме пăхмасăр, вилĕмрен шикленмесĕр пăр тăрăх ҫыран хĕррине ҫитсе хула патнелле талпăннă. Пĕрреҫинче Ахпӳрт каччи Ленинградра апат-ҫимĕҫ валеҫекен пунктра Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялĕн ҫыннипе Нил Казаковпа паллашнă. Унăн ывăлне Николай Казакова Чăваш Енре пĕлмен ҫын ҫук, вăл – паллă композитор, Чăваш патшалăх филармонийĕн директорĕ. Николай Нилович кĕвĕленĕ чăваш эстрада юррисем халăх хушшинче анлă сарăлнă, чылайăшне хăех шăрантарать. Нилпа Мишшăна 196-мĕш пехота дивизине минометчиксен взводне янă. Командирĕ Иванов хушаматлăскер – чăвашран пулнă. М.Прокопьева сержант званине панă.

– Пĕрремĕш ҫапăҫăва 1943 ҫулхи кăрлачăн 13-мĕшĕнче кĕтĕмĕр. Фашистсем Синявин тӳпемĕсем ҫинче ҫирĕпленсе ларнă. Кунта «А зори здесь тихие» кинофильмри пекех шурлăх нумай. Минăсемпе снарядсем лачакана ӳксе ҫурăлаймастчĕҫ. Юнлă ҫапăҫусем пуҫланчĕҫ. Мĕн чухлĕ пирĕн салтак пĕтмерĕ пуль. Йĕпе, пылчăк пулнипе автоматсемпе винтовкăсем пеменни теміҫе хутчен те пулчĕ. Пур ҫĕрте те виле, аманнисем. Ҫак ҫапăҫура эпĕ икĕ хутчен амантăм. Госпитальте виҫĕ уйăх выртрăм. Сывалсан – каллех фронта, – аса илчĕ Михаил Прокопьевич.

1944 ҫулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче Ленинграда тăшман ункинчен хăтарма наступлени пуҫланă. Ун чухне М.Прокопьев 220-мĕш уйрăм танк бригадин саперĕ пулнă. Икĕ эрнерен Нева ҫинчи хулана ирĕке кăларнă. Фашистсене Псков еннелле хăваланă. Унта вĕсем хӳтĕлевре тăнăран пирĕн ҫарсем пысăк ҫухату тӳснĕ. Тăшманăн тĕрлĕ техника нумай пулнă. Пĕр вăхăтрах 50 самолет тӳпене ҫĕкленме пултарнă.

– Куҫ умĕнчех юлташсем вилетчĕҫ. Шупашкар каччипе Подлекаревпа пĕр котелокран апат ҫиеттĕмĕр. Ҫапăҫусенчен пĕринче вăл вилмеллех аманчĕ. Тепĕр салтак пирĕн танк айне пулчĕ. Вăл тăшман пульлисенчен хӳтĕленсе танк айне пытаннă. Механик-водитель техникăна ҫавăрса тăратнă чухне ăна асăрхаса ĕлкĕреймен. Тем те пулнă. Салтаксен хушшинче чăвашсем тăтăшах тĕл пулатчĕҫ. Артиллери полкĕнче Ҫатăрка Ҫырми ялĕнче ҫуралса ӳснĕ Чернов службăра тăратчĕ. Пирĕн танк чаҫĕнче Пушкăртстан чăвашĕсем иккĕнччĕ. Иккĕшĕ те мина ҫурăлнипе пĕр самантрах вилсе выртрĕҫ. Пире, саперсене, малта пыракан танксем ҫине лартса ҫула минăсенчен тасатма илсе каятчĕҫ. Вăрҫă вăхăтĕнче пурне те йывăр пулнă: фронтра та, тылра та. Тискер кайăксем те нуша тӳснĕ. Сăмахран, тупăсенчен пенĕ хыҫҫăн мулкачсене хăлхисенчен ярса илме пулнă. Мĕншĕн тесен вĕсем хăранипе тата вĕҫĕмсĕр чупнипе халтан кайнăскерсем тарса хăтăлаймастчĕҫ, пĕчĕк ачасем пек йĕретчĕҫ мĕскĕнсем. Мĕн чухлĕ лаша пĕтрĕ тата! – малалла каласрĕ ветеран.

Псков ҫывăхĕнчи ăнăҫсăр ҫапăҫусем хыҫҫăн М.Прокопьев хĕсметре тăракан танксен бригадине Сапилка текен вырăна куҫарнă. Вăй илсе ҫирĕплансен, ҫĕнĕ техника килсе ҫитсен чаҫе Карели тăрăхне куҫарнă. Ҫĕртме уйăхĕнче каллех ҫапăҫăва кĕнĕ. Часах иккĕмĕш фронт уҫни ҫинчен сас-хура тухнă. Хавхаланнă салтаксем кĕҫех Выборг хулине ирĕке кăларнă. Каярахпа Финлянди вăрҫăран тухни ҫинчен пĕлтернĕ. Танксен бригади техникăна платформăсем ҫине тиенĕ те нимĕҫсенчен хăтарнă Нарва заставине куҫса кайнă.

– Пирĕн армин командирĕ Н.Берзарин генерал пулнă. Каярахпа ăна Берлин хулин комендантне лартрĕҫ. 1945 ҫулхи кăрлачăн 18-мĕшĕнче Варшавăшăн пынă ҫапăҫура ураран амантăм. Чаҫрех юласшăнччĕ, анчах госпитале приказ парсах ăсатрĕҫ. Госпитальтен инҫех мар Майданек вилĕм лагерĕ вырнаҫнăччĕ. Кантăкран унăн тăрписем курăнатчĕҫ. Ҫăмăлрах аманнă салтаксем унта кайса курчĕҫ, кăмакасенче ҫунтарнă ҫынсен ватă-пушмăкĕ купи-купипе выртни ҫинчен каласа паратчĕҫ. Уйăхран сывалса ҫитрĕм, Потсдам ҫывăхĕнче тăракан юлташсем патне таврăнтăм. Ака уйăхĕн вĕҫĕнче пиччепе, Тихонпа, тĕл пултăм. Иксĕмĕр те пĕчĕк ачасем пек хĕпĕртесе ӳкрĕмĕр. Сталин приказĕпе килĕшӳллĕн пĕр тăвансем тĕл пулсан вĕсене службăна малалла пĕр чаҫре тăсма ирĕк панă. Эпĕ К.Рокоссовский маршал штабĕн ҫыхăнуҫи пулса тăтăм. Паллă ҫар пуҫне темиҫе хутчен те курма тӳр килчĕ. Пиччепе, ҫар врачĕпе, Берлина ҫитрĕмĕр, рейхстаг стени ҫине «Прокопьевы из Чувашии» тесе ҫыртăмăр. 1945 ҫулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче демобилизацилерĕҫ. Канаш станцийĕнче колхозра механизатора ĕҫлекен аппа, Полина, кĕтсе илчĕ. Тӳрех анне патне Ҫĕнĕ Ахпӳрте вĕҫтертĕмĕр, – терĕ Михаил Прокопьевич.

Фронтра М.Прокопьев тутар каччипе З.Мардагалимовпа туслашнă. Иккĕшĕ те сапер. Ҫĕнтерĕве Берлинта кĕтсе илнĕ. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Вăрҫă хыҫҫăн вĕсен ҫыхăнăвĕ татăлнă. Пĕр-пĕрне тупма 220-мĕш танк бригадин ветеранĕсен канашĕ пулăшнă. 42 ҫултан вĕсем Аслă Ҫĕнтерӳ кунĕнче Ленинградра пĕр-пĕрне хыттăн ыталанă. Аса илӳсен вĕҫĕ-хĕрри пулман. Хусанта пурăннă З.Мардагалимов урăх тĕнчене кайнăрăнпа пилĕк ҫул иртнĕ ĕнтĕ. Михаил Прокопьевич тусне яланах аса илет. Мĕнле манăнха: вилĕме ҫĕнтерсе тăван киле тĕрĕс-тĕкел таврăннă вĕт-ха.

М.Прокопьевăн пиччĕшĕ Тихон та тахҫанах ҫук ĕнтĕ. Тăванĕсен хушшинче вăрҫăран таврăнайманнисем сахал мар. Сăмахран, Д.Константинов хыпарсăр ҫухалнă, трактористра ĕҫленĕ Иванпа Алексей Цаплинсем Курск патĕнче пурнăҫран уйрăлнă.

– Ветерансен канашĕ тата ҫамрăк йĕрлевҫĕсен организацийĕ чĕннипе Ҫĕнтерӳ уявне ирттерме Ленинграда виҫĕ хутчен кайса килтĕм. Ҫапăҫнă вырăнсенче пултăм. Унта пĕтĕмпех курăк пусса илнĕ, нимле паллă та юлман. Хама амантнă вырăна пур пĕр шыраса тупрăм. Кашнинчех ҫарти туссемпе тĕл пулса ҫамрăклăха аса илтĕмĕр, чун каниччен каласрăмăр. Ҫитĕнекен ăрава ҫапла калас килет: Тăван ҫĕр-шыва тĕрлĕ йăх-яхран хӳтĕлеме яланах хатĕр пулăр, унсăрăн ăна ҫухатасси те инҫе мар, – вĕҫлерĕ сăмахне вăрҫă ҫулăмĕ витĕр тухнă ветеран.

Михаил Прокопьевич ачисен, мăнукĕсен, кĕҫĕн мăнукĕсен пурнăҫĕпе интересленсех тăрать, сĕнӳ, канаш парать. Ахаль салтак, ахаль вĕрентекен пулнă, тăванĕсемшĕн, юлташĕсемшĕн вара – яланах уҫă кăмăллă чăнчăн ҫын.

■ **Виталий АЧЧА.**

Канаш районĕ.
Ҫемье архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

Тупăшу

КВНра – тавҫăруллисем кăна!

Шупашкарта пуҫласа РФ ШЕМĕн вĕренӳ заведенийĕсен курсанчĕсен тата ҫĕр-шыври полиции территори органĕсен сотрудникĕсен КВН командисен тупăшăвĕ иртрĕ. Пухăннисем КВНăн уйрăм статуслă «Подъем» лигин кубокĕшĕн кĕрешрĕҫ.

Йĕркелӳҫĕсен шухăшĕпе – кунта КВН юхăмĕ вăйлă аталаннă, ҫавăнпа пакунлисем хăйсен тупăшăвĕ валли Шупашкара суйласа илнĕ те. Хусанкай ячĕллĕ культура керменне йĕркелĕх хуралҫисем Мускавран, Санкт-Петербургран, Омскран, Краснодартан, Ĕпхӳрен тата Рязаньтен килнĕ. Чăннипех пысăк уяв пулчĕ. Паллах, шӳтсемпе вăйăсенчен ытларахăшĕ пакунлă ҫынсемпе, вĕсен службипе ҫыхăннă. Полицейскисем хăйсен шучĕсене Шупашкарпа ҫыхăнтарма та пултарчĕҫ – питĕ те хаваслă, пултаруллă ҫынсем. Кашни командăна зал тăвăллăн алă ҫупса тав турĕ.

– Сцена ҫинче мĕн пулса иртнине курнă май «полицейскисем те ҫынсемех иккен!» текен шухăш ҫуралчĕ, пурте маттур! – шӳтлесе палăртрĕ ЧР ШЕМĕ ҫумĕнчи Общество канашĕн ертӳҫи Игорь Кустарин. Вăл хăй ертсе пыракан канаш ячĕпе «Вĕсене милици шырать» командăна /Рязань/ парне парса хавхалантарчĕ. Тепĕр тесен никам та парнесĕр юлмарĕ. Ҫуллахи кубок-2014 ҫĕнтерӳҫин ятне вара Краснодар команди тивĕҫрĕ. Тупăшу йĕркелӳҫисем вăйăсене Шупашкарта ирттерме пулăшнăшăн республикăн Шалти ĕҫсен министерствине тав турĕҫ.

■ **Инна СУРКОВА**

Чăвашстат хыпарĕсем

Тăван тавралăх сыхлавĕн тĕп кăтартăвĕсем

Тăван тавралăха сыхласси ҫĕр-шывăн политика, экономика тата общество пурнăҫĕн приоритетлă ыйтăвĕ шутне кĕрет тата наци хăрушсăрлăхĕн тĕллевĕ пулса тăрать.

Промышленноҫ индустрийĕ тата этем ĕҫĕ-хĕлĕпе ҫыхăннă ытти пулăм аталаннă май экологи лару-тăрăвĕ ҫивĕчленсех пырать. Унăн ыйтăвĕсене пĕрлехи вăйпа татса пама пултарни кăна малашлăха ырă витĕм кӳрĕ.

Чăваш Республикинче туса кăларакан производствăсем, электроэнерги объекчĕсем сахал мар, автомобиль транспорчĕ ҫуллен хушăнса пырать.

2013 ҫулта стационарлă ҫăл куҫ атмосферăна кăларса янă тасамарлăх 30 пине яхăн тоннăпа танлашнă. Ăна упрамашкăн хывнă тăкак х 900 пин тенке ҫывхарнă.

Влаҫăн тĕрлĕ шайри органĕсем экологи лару-тăрăвне лайăхлатассипе сыхăннă тĕп тĕллевсене татса памалли программăсене туса хатĕрлеҫҫĕ тата пурнăҫа кĕртеҫҫĕ. Ҫакă тăван тавралăх пахалăхне тата этем пурнăҫĕн экологи условийĕсене лайăхлатма, экономика аталанăвĕн экологи тĕлĕшĕнчен палăртнă тĕслĕхне тата производствăсен ку енĕпе тупăшма пултараслăхне йĕркелеме пулăшать паллах.

x/ Ытти предприяти-организацие тӳленĕ укҫа-тенке шута илмесĕр

ИНФОГРАФИКА



Вĕренӳ

Мониторингпа ҫыхăннă сас-хура тавра

Массăллă информаци хатĕрĕсем ҫак саманта асăрхасах каймарĕҫ, анчах халĕ шăпах ҫамрăксем аслă шкулсене вĕренме кĕмелли тапхăр пулнине шута илсен – сӳтсе явмалли тема. Министрсен Кабинечĕн иртнĕ эрнери ларăвĕн кун йĕркинчи ыйтусене тишкерсе пĕтернĕ хыҫҫăн ăна ЧР Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев хускатрĕ.

Вĕрентӳ сферинчи управлени тухăҫлăхĕ тĕлĕшпе тĕрлĕ сас-хура ҫӳрет, мониторинг ирттернĕ – кăтартусем еплерех? Ҫак ыйтăва Михаил Васильевич республикăн вĕренӳ министрне Владимир Иванова пачĕ.

Владимир Николаевич пĕлтернĕ тăрăх – аслă вĕренӳ заведенийĕсен ĕҫ-хĕлĕн тухăҫлăхне хаклакан мониторинга РФ Вĕренӳ министерстви ирттернĕ. Ыттисен шутĕнче Чăваш Ен территорийĕнче вырнаҫнă 5 вузпа 15 филиал ĕҫĕпе те паллашнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ мĕн пур кăтартупа ырă улшăнусене тивĕҫтернĕ май тухăҫлăх мониторингĕн чикĕ шайĕнчи кăтартăвĕсенчен ăнăҫлă иртнĕ.

Шел те, тăватă кăтартуран сахалрах пурнăҫланă учрежденисен шутне 3 вузпа 14 филиал лекнĕ. Ҫав шутра – Чăваш патшалăх ял хуҫалăх академийĕ, Чăваш патшалăх культура институчĕ, Раҫҫей кооперацион университечĕн Шупашкарти кооперацион институчĕ /филиалĕ/, Раҫҫей халăх хуҫалăхĕн тата патшалăх службин академийĕн Шупашкарти филиалĕ, ыттисем.

Министр тивĕҫлĕ комиссире ял хуҫалăх академийĕ тата кооперацион институчĕ тĕлĕшпе хамăрăн позицисене хӳтĕлес тĕллевпе ҫине тăнине палăртрĕ. Асăннă кăтартусенче субъективлă самантсем те пурмĕн. Кооперацион институтне илес тĕк, сăмахран, Мускаври университет филиалсен кăтартăвĕсене хăйĕн ҫине илсе «вăтамлатнин» витĕмĕ пурри курăнать.

Апла пулин те хăш-пĕр филиал абитуриентсене вĕренме йышăнмасть ĕнтĕ. Ҫав шутра – университетăн Патăрьелти, Канашри подразделенийĕсем. Улатăртине илес тĕк, Владимир Николаевич шухăшĕпе, ăна хӳтĕлени вырăнлă – электротехника, строительство специальноҫĕсемпе вĕрентме пулать. В.Иванов ҫавăн пекех Мускаври вузсен кунти филиалĕсенче бюджет вырăнĕсен шутне ӳстерме хистенине палăртрĕ. Ҫавна май МАМИ ректорĕ хăй те кунта килнĕ – абитуриентсене йышăнмалли бюджет вырăнĕсен шутне пысăклатма пултарнă. МАДИ те ҫав ҫулпах утать.

Хайхи мониторинга илес тĕк, Владимир Николаевич шухăшĕпе, хаклав тĕлĕшпе гуманитари вузĕсен условийĕсем ансатрах, техника специальноҫĕсене вĕрентекеннисен – кăткăсрах. Кирек мĕнле пулсан та вăл иккĕленмест: лару-тăрăва куҫран вĕҫертмен. Ҫавна май маларах ыйтусем ҫуратнă педуниверситет, ава, паян «эффективлисен» шутĕнче. Тепĕр енчен, «ҫӳлти» пĕр-пĕр вуз кирлĕ мар тесен те унăн кунти филиалĕнче пĕлӳ илекенсен вĕрентĕвне хамăрăн вузсенче малалла тăсма май пур.

М.Игнатьев ҫак ҫивĕчлĕхре конкуренци сĕмĕ пуррине те палăртрĕ. Культура институчĕпе пайăррăн кăсăкланчĕ: ăна упраса хăвармаллах, анчах министр ертӳҫе улăштарасси пирки каланăччĕ пулас... В.Иванов наци кадрĕсене федераци укҫипе хатĕрлессине упраса хăварма тăрăшни ҫинчен каларĕ. Анчах ЧР Пуҫлăхĕн сăмахĕнче калаҫу культура министрĕ пирки пулчĕ те – Вадим Ефимов та сăмах хушрĕ: «Культура институтĕнче тивĕҫлĕ программа йышăннă, вăл йĕркеллех пурнăҫланать. Унта ют ҫĕр-шыв студенчĕсем ҫукки пирки ӳпкев пулнăччĕ, малашне пулмалла – 6 абитуриент унта вĕренес кăмăллă. Институт лаптăкĕсем тĕлĕшпе те ыйтăва татса панă. Раҫҫей министерствин позицийĕ институт шăпине республикăна парассипе ҫыхăннă».

Калаҫава М.Игнатьев пĕтĕмлетрĕ: «Вĕренӳ процесĕсене илес тĕк – вĕсем хаклав кăтартăвĕсене тивĕҫтермелле. Ӳпкев пур тăк – уйрăм персоналисем тĕлĕшпе ыйтусем пулмалла. Анчах ку ыйтупа тĕрлĕ спекуляци ан пултăр – ĕҫлĕр!»

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Аван-и, тăванăм?

ЧĂВАШ ТЁНЧИ

Хушма кăларăм

Шăпа

«Геологăн 100 професси»

Вăл 46 çул республика тулашёнче пурăнать пулин те Чăваш Ене юратма пăрахман, тăван чёлхене манман. Сăмахăм Патăрьел районёнчи Нăрваш Шăхальте çут тёнчене килнё Виталий Макаров пирки. 75-ри Виталий Гаврилович пёр-ик çул каялла кăна ёçлеме пăрахнă. Шăпа тени ăна Тюмень облаçёнчи Нижневартовск районёнчи Ларьяк ялне илсе çитернё. Виталипе мăшăрё Галина унта çурт лартнă. Çуллахи вăхăтра вара Макаровсем шурă Шупашкара килсе пурăнаççё. Кунта вёсен хваттер те, дача та пур.

«Ăçта çуралнă – çавăнта кирлё пулнă»,– тени пур чухне те тӳрре тухмасть. Чун туртăмёпе професси çынна чăматан йăттарса çёр-шывăн тёрлё кётесне илсе кайма пултараççё. Мал ёмётлё Виталий вара вăл вăхăтшăн сёре «моднăй» професси суйланă, геолог пулма тёв тунă. Юрё, тёлсёр-палсăр малалла чупам мар-ха, йёркипе каласа парам. Çичё ачаллă çемьере ӳснё Виталий, Нăрваш Шăхальти, унтан Аслă Арапуçёнчи шкулсенче пёлӳ илнё. Вёренӳшён çунаканскер кёçех Канашри педучилищёне кайса кёнё. Вёреннё вăхăтра спортпа туслашнă. Чупасси те, йёлтёрпе ярăнасси те, баскетболла вылясси те илёртнё ăна. Хăвăртлăхёпе, пуçарулăхёпе, хастарлăхёпе палăракан яша училёщён пёрлештернё команди йышне кёртнё. Тёрлё хулари ăмăртусене хутшăннă вёсем, чылай чухне малти вырăнсене йышăннă. Диплом илнё хыççăн çамрăк специалист Йёпреçри ача çуртне пионер вожатăйне вырнаçнă. Каярах Первомайски район администрацийёнчи спорт комитечён председателёнче вăй хунă. Пёр тапхăр – Турханти, унтан Ишлё Шетмёри шкулсенче физкультура, математика предмечёсене вёрентме тӳр килнё. «Ун чухне хальхи пек машина йышлă марччё, Ишлё Шетмёрен 30 çухрăмри Патăрельне ăмăртусене çуран каяттăмăр. Хăна çурчёсем пулман, çынсем патённче çёр каçаттăмăр. Йывăрлăхсем хăратман, тупăшусене хутшăнса шутсăр вăй виçес килетчё»,– ăшшăн аса илет паян иртнё кунçулне Виталий Гаврилович.

Çамрăк учитель пёлёвне тата та ӳстерес шухăшпа И.Я.Яковлев ячёллё пединститута/ халё университет/ физикăпа математика факультетне çăнсăр майпа вёренме кёрет. Çёньел, Турхан шкулёсенче ачасене пёлӳ парать. Пёр хушă райкомра иккёмёш секретарьте /Патăрьелте/ вăй хурать. «Анчах манăн каллех вёренес килетчё. Ача чухнехи икё ёмёт – геолог пуласси тата мёнле те пулсан университетра пёлӳ илесси – канăç памастчё. Анчах маларах анне: «Çурт лартмасăр ямастăп сана», – тени тытса чарнăччё. Çурт çёклерёмёр те Саратоври университета геологи факультетне вёренме кётём. Пирён вăхăтра радиопа пёрмаях геологсем пирки калатчёç. Вёсен хăйсен тёттём кăвак тёслё форми те пурччё. Хитреччё. Хушăран Юхмапа Пăла тăрăхне те килетчёç. 1968 çулта, университетран ăнăçлă вёренсе тухнă хыççăн мана Тюмень хулине ёçлеме ячёç»,– пёлтерет Виталий Гаврилович.

Çамрăк геолога тӳрех Ханты-Мансийск хулинче хваттер параççё. Çёр айёнчи пурлăха – нефть, газ, шыв тата ытти те – шыранă çёрте ёçлет вăл. «Вăл вăхăтра Çёпёрте нефть бумёччё. Мускавран, Львовран, Киевран, Новосибирскран геологсем йышлăн пырса тулнăччё. Çамрăксем карьера пусмипе хăвăрт хăпаратчёç. Вăтăртах экспедици пуçлăхё е цех ертӳçи пулатчёç. Мана та виçё уйăхранах парти ертӳçине лартрёç, кёçех аслă геофизик пулса тăтăм. 25 çул иртнине те сиссе юлаймарăм. Чылай медале, Хисеп хутне, ытти наградăна тивёçрём. Иртнё ёмёрён 90-мёш çулёсенче геофизикăпа геологи пётме пуçларёç. Вёсен малашлăхё уçăмсăрччё. Вара эпё ЖКХ тытăмне лекрём. Унтанах тивёçлё канăва тухрăм. Юлашки вăхăтра ытларах Ханты-Манси округне кёрекен Ларьяк ялёнче пурăнатпăр»,– сăмахне малалла тăсрё манăн çёнё пёлёшём.

Василий Макарова пурнăçра пулăшса, хавхалантарса пыракнё – мăшăрё Галина. Василий Гаврилович унпа 1968 çулта Аслă Арапуç культура çуртёнче паллашнă. Ун чухне ялти культура вучахёнче студентсемпе тёл пулу йёркеленё пулнă. Йёкёт кёçех диплом хӳтёленё, тепёр эрнеренех туй кёрленё. Шупашкарти И.Я.Яковлев ячёллё педуниверситетра истори факультетне пётернё Галина Васильевна Ханты-Мансийскри пёр шкулта ачасене вёрентнё. Каярах юхан шыв училищинче нумай çул вăй хунă. Тивёçлё канăва Ларьякри коррекци шкулёнчен тухнă. Вăл – Ханты-Манси округён вёрентёвён тава тивёçлё ёçченё, ёç ветеранё. Ёçри çитёнёвёсемпе хастарлăхёшён нумай-нумай Хисеп хутне тивёçнё. Макаровсем икё хёр пăхса ӳстернё, тивёçлё воспитани, аслă пёлӳ панă. Паян ватăсем куç тулли телейёпе – виçё мăнукёпе – йăпанаççё.

«Эпё çамрăклах авланма шухăшламан. 10-мёш класра вёреннё чухне: «Виталий, санăн 27 çула çитиччен çемье çавăрмалла мар»,– тесе сăмах панăччё хама. Сăмахăма тытрăм вёт, 29 çеç çемье пуçё пулса тăтăм. Паянхи кунченех килёштерсе пурăнатпăр ав. Геолог пулни мана пурнăçра нумай ыррине панă. Ахальтен мар: «Геологăн 100 профессирен кая мар»,– теççё. Çав «дорох» текеннисем вырăсла та лайăх вёренсе çитейместчёç, тăван чёлхене те «пăсатчёç». Эпё чăваш чёлхине манмарăм, лайăх çыратăп, вырăсла пупленё чухне вара пёрех акцент пур. Эпир ӳснё чухне вырăс чёлхине нимёç чёлхине вёреннё пек ăша хываттăмăр. Шкулта итлесе ларнă та – тек калаçнине илтмен. Çуралнă тăрăха – Нăравш Шăхальне – çулсеренех, хăш чухне икё çулта пёрре çитсе килме тăрăшатăп. Манăн шухăшпа, чăваш чёлхи пётмест. Вăл улшăнса, аталанса пыма пултарать.

Паян Виталий Гаврилович мăнукёсен çитёнёвёсемпе çунатланать, канлё ватлăх пирки ёмётленет. Киленёçне вара манаймасть, паян хăй чупмасть, зарядкăпа кăна çырлахать пулин те, телевизорпа спорт каналне пăхма кăмăллать. Çёнё кашни куна чун хавалёпе кётсе илет.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Автор сăн ӳкерчёкё



● *Виталий Гаврилов.*

Шухăшпа – Шупашкартах

Чăваш наци конгресён черетсёр саккăрмёш Аслă Пухăвне килнё делегатсен пёр ушкăнёпе тёп хулари Хёрлё тӳремре тёл пултăмăр. Вёсем /сăн ӳкерчёкре сулахайран сылтăмалла/: Пушкăртстанри Пелепей хулинчи чăваш гимназийён вёрентекенё Алексей Емельянов, ЧР Министрсен Кабинечён Ямал–Ненец автономи округёнчи суту-илӳ представителё Анатолий Ефремов, Тюмень облаçёнчи Муравленко хулинче пурăнакан Николай Ильичев.

Йăхташăмăрсен ёçё-хёлёпе, Чăваш наци конгресён Аслă Пухăвё, Республика кунё пирки çуралнă шухăшёсемпе кăсăклантăмăр. Калаçава Анатолий Ефремов пуçларё:

– Общество енёпе пурнăçлакан тивёçсем чылай манăн: суту-илӳ представителёсёр пуçне Муравленко хулинчи чăвашсен "Пёрлёх" наци культура автономине ертсе пыратăп, çавăн пекех Ямал–Ненец автономи облаçён кёпёрнаттăрё çумёнчи Этноконфесси ыйтăвёсем енёпе ёçлекен консультаци канашён членё.

Ямалта 526 пин çын пурăнать, вёсем –100 халăх представителёсем. Чăвашсене илес тёк – унти кашни хулара 400-500. Пурте тенё пекех нефть, газ кăларас енёпе ёçлеççё, вёсенчен тёрлё хатёр туса илнё çёре хутшăнаççё. Влаç органёсенче те тёл пулатăн йăхташсене. Тепёр чухне пире ăмсанакансем те пур: вёсене чăвашсем туслă пурăнни, тёрлё уяв-праçнике пёрле ирттерни тёлёнтерет. Муравленкора, сăмахран, "Хавас" фольклор ансамблё пирки илтмен çын çук та пулё. Халăх пултарулăхёпе çитёнекен ăрăва та кăсăклантарма тăрăшатпăр, кунта вёсен "Шевле" ансамбль пур. Пирён коллективсем Ямалти пур хулара та пулса курнă, чăваш юрри-çеммипе паллаштарнă.

ЧНК юлашки тапхăрта хастарлăхне ӳстерчё, кăçал пуçласа Раççейри чăваш предпринимателёсен пёрремёш форумне ирттерчё. Çакă – питё кирлё ёç. Аслă Пухура хамăн шухăшсемпе паллаштартăм, çак ыйтусене хускатрăм: малашне чăвашлăх хастарёсене кунашкал мероприятисене пёрешкел тумпа – шурă кёпёпе тата сарă галстукпа – килме сёнтём. Пире, республика тулашёнче пурăнакансене, "диаспора" тесе палăртни те кӳрентерет. ЧНК президенчён статусё, ман шухăшпа, ЧР Министрсен Кабинечён Председателён çумённинчен пёчёк пулмалла мар.

Алексей Емельяновшăн Шупашкар – чи илемлё хуламён. Пушкăртстанри Пишпӳлек районне кёрекен Кистенлёре кун çути курнă йёкёт И.Н.Ульянов ячёллё Чăваш патшалăх университетёнчи чăваш уйрăмёнчен вёренсе тухнă. Халё инçетре ёçлесе пурăнать пулин те, ёмёт-шухăшёпе – Шупашкартах.

Республика кунё пирки çапла шухăшлать:

– Питё кирлё уяв. Çёршыври чăвашсене пёр тёвве пухать, тус-юлташсем тупма, чăваш сассине тёнче шайне çёклеме пулăшать.

Уява çулленех хутшăнма тăрăшатпăр. Кăçал вара пушă алăпа килмерёмёр – Наци библиотекинче "Краткая чувашская энциклопедия Башкортостана" кăларăмăн презентацине ирттертёмёр. Унта республикăра ёçёпе чапа тухнă 1700 çын пирки çырса кăтартнă. Çак "ылтăн çӳпçе" питё кирлё, вăл пире пурсăмăра та чăваш пулса пурăнма хистет.

Сăн ӳкерчёкри виççёмёш çын – Николай Ильичев, вăл чылай вăхăт Ямал–Ненец автономи округёнче ёçлесе пурăннă, халё Шупашкарта тёпленме шухăшлать.

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Автор сăн ӳкерчёкё

Чунри

"Чул касас пек ёç тăрать..."

Юлашки икё уйăх чăвашлăхпа çыхăннă мероприятисемпе пуян пулчё. Шупашкарта та, ун тулашёнче те, ытти региона та иртрёç вёсем. Сăмахăм, тёпрен илсен, Пётём чăвашсен иккёмёш Акатуйё, Тутарстанри йăхташсен Уявё тата Чăваш наци конгресён Мăн Канашёпе Аслă Пухăвё пирки. Тёрлё хутлăхра тёпленсе пурăнакан чăвашсене хускатса илчёç вёсем.

Шупашкарта Акатуйпа ЧНК Аслă Пухăвне пёр вăхăтра йёркеленине ырламалла. Тăкака перекетлесе икё ёç тума май килчё. Ютра пурăнакансем Шупашкара "Меккăна" туртăннă пек васкаççё. Кунта вёсен – çёр, чун кăвапи. Акатуй кăçал Хёрлё тӳреме çитнишён пёчёк ача пек савăнакансене хам куçпа курса ёнентём. Çакă – вёсен шухăшёпе – юлашки вăхăтри чăвашлăх ёçёнчи чи пысăк çитёнӳсенчен пёри-мён. Самар облаçёнчи чăваш наци культура пёрлёхёсен координаци канашён, облаçри "Пехил" культура обществин хастарё Николай Давыдов çакăн пек сёнӳ пачё: "Хёрлё тӳремре халё чăваш Юпи кăна çитмест, çитес çулхи Акатуйра питё курас килет ăна çакăнта,"– терё. Çак шухăша ыттисем те ырласа йышăннёç.

Акатуя хутшăннă коллективсем хăйсене тата мёнлерех туяççё! Кунта килес умён вырăнта смотр-конкурс ирттереççё, унта палăрнисем çеç Шупашкара çул тытма тивёçлё.

Акă Чёмпёр облаçёнчи Аслă Нагаткинăри Чёмпёр облаçён хисеплё гражданинё, Раççей Федерацийён культурăн тава тивёçлё ёçченё Валентина Тарават ертсе пыракан "Шанăç" халăх ансамблёпе çывăхрах паллашрăм.Валентина Николаевнăн пуçарăвёпе чăмăртаннă ансамбль тăваттăра çеç-ха, анчах та виççёмёш çул ёнтё вăл "халăх" ятпа çӳрет. Акатуя та тăваттăмёш хут хутшăнать, халăх пултарулăхён "Раççей çăл куçёсем" фестивальне – иккёмёш хут. Репертуарта халăх, автор юррисем, çав шутра ансамбль ертӳçи хăй кёвёленисем те.

● *"Шанăç" коллектив.*

– Тăван Шупашкара килсе кайни хавхалану кӳрет пире,– терё Валентина Николаевна.– Ыттисенчен нумай вёренетпёр. Акă сцена çинчен тин çеç "Уяв" артисчёсем анчёç. Питё килёштеретёп эпё вёсене, лайăххине илме тăрăшатăп.

Пёр-пёринчен вёренмелли Шупашкарта çеç мар тенё пулăттăм. Нумаях пулмасть çеçха Нурлата Тутарстанри чăвашсен Уявне кайса куртăмăр. Питё килёшрё Уяв! Акатуя хăнăхса çитрёмёр-ши? Кашниннех пёр евёрленсе пынăн туйăнать. Уявра вара пёрремёш хут çеç те – мёнпе тыткăнларё вăл! Пурнăçри пек пулнипе. Ташши-юррипе те, вăйли-кулипе те, йăли-йёркипе те. Саманапа пёр пултăр тесех ахăртне вырăнти аваллăх управçинчи – Кама леш енчи истори музейёнчи – экспонатсене илсе тухнă. Асаннесен килти арчисенчен – пиртен тёртнё хатёрсене, вётё çёвёпе тёрлесе эрешленё ал шăллисене тата ыттине те. Самантлăха чуна çывăх тёнчере пулса куртăм. Уява коллективсем таçтан та килсе çитнё. Пёринпе паллашас терём те– Чăваш Енренех пулчё. Çёмёрле районёнчи Егоркинăри Людмила Григорьева ертсе пыракан "Шанăç" фольклор ушкăнё кунта иккёмёш хут-мён. Пилёк çул каялла пулнисем ырласа каласа кăтартнăран ун чухне килейменнисем инçе çула тухнă иккен. Муркаш районёнчи Ориниври ветерансен халăх коллективё вара меллё самантпа тата ытларах усă курма май тупнă: несёлсен авалхи чаплă хулисем пулнă вырăнсене – Пӳлерпе Сувара – çитсе килме тёв тытнă.

Акатуй та, Уяв та хыça юлчёç, утă уйăхё кёрлесе çитрё. Ирпе ирех каллех хёрӳ ёç вёре пуçларё. "Утта пырса çапăнтăмăр: малашне чул касас пек ёç тăрать," – тенё пирён ватăсем. Çапла çаврăнса пырать вăхăт, çапла хыça юлать кун-çул. Тепёр çулччен, Акатуй, Уяв!

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Автор сăн ӳкерчёкёсем

● *Куравра – ал шăллисем.*

Пархатарлă ёмёт

Тутарстанри Элкел районне кёрекен Хусанкай ялёнче ентешён – Чăваш халăх поэчён Петёр Хусанкайăн – музейё пур. Унăн директорё – Олег Мурзин вёрентӳçё /сăн ӳкерчёкре/.

Олег Витальевичпа Тутарстанри чăвашсен саккăрмёш Уявне музейри чылай экспоната илсе пынăччё. Пёр стенд Петёр Хусанкайпа паллаштарать, тепёрне Чăваш халăхне çутта кăларнă Иван Яковлева халаллăнă.

Кёске калаçуран çакă паллă пулчё: музейри тёп экспонат шучё 500, фондра тата çавăн чухлё упранатьмён. Аваллăх управçи валли Иван Яковлев 1903 çулта тунă шкул çуртне панă. Ăна тёпрен юсамалла. Пурăнакиле унта Тутарстанри чăвашсен музейне уçас ёмётпе пурăнаççё Олег Мурзин тата ун пекех харсăр чунлă чăвашсем.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА.**

Автор сăн ӳкерчёкё

Тюменьри йăхташсен хастарлăхё

Иртнё уйăхра Тюмень облаçёнчи йăхташсем чăвашлăхпа çыхăннă темиçе мероприятие хутшăнчёç. Çёртмен 7-мёшёнче облаç центрён тёп стадионёнче наци культурисен çирёммёш фестивалё иртрё.

Унта ку тăрăхри 20 ытла наци пёрлёхё пулчё, вёсен пултарулăхёпе Тюмень облаçён пуçлăхё Владимир Якушев та паллашрё. Чăвашсен "Тăван" ассоциацийё лайăх енёпе палăрчё: Игорь Алексеев юрăç тата "Тантăш" фольклор ушкăнё фестиваль лауреачёсен ятне илчёç.

Тепёр эрнеренех Анат Тавда районёнчи Канаш ялёнче "Тантăш" халăх ансамбльне йёркеленёренпе 25 çул çитнине халалласа Ял кунне ирттерчёç. Мероприятие район ертӳçисем, "Тăван" ассоциацин хастарёсем хутшăнчёç. Тюмень облаçён Национальноçсен ёçёсен комитечён Хисеп грамотине "Тантăш" фольклор халăх коллективё, ялти чăваш музейён директорё Ирина Григорьева тивёçрёç.

Çёртме уйăхён 28-мёшёнче Тюменьре, Тура юхан шыв хёрринчи кану паркёнче, облаçри чăвашсен йăлана кёнё çурхи уявё Акатуй иртрё. Пуçласа ăна Канаш ялёнче 1992 çулта йёркеленёччё. Унтанпа çулленех Чăваш Енрех пултарулăх ушкăнёсене, уйрăм юрăçсене йышăнаççё. Кăçалхи Акатуя Вăрнар районёнчи ял тăрăхёсен хушшинчи культурăпа кану центрё çумёнчи "Тивлет" ансамбль килчё. Вăл чăваш музыка композицийёпе, сюитăпа паллаштарчё.

Акатуй лапамёнче чăваш ал ёç ăстисен ёçёсен куравне йёркеленё, наци апат-çимёçне сётел тулли хатёрленё. Унсăр пуçне пăхаттирсем чăваш кёрешёвё енёпе вăй виçрёç, кире пуканё çёклерёç. Кёçён çултисем валли ятарлă лапам ёçлерё.

■ **Анатолий АРХИПОВ**

Кăларăма Надежда СМИРНОВА хатёрленё.

Иван ЕГОРОВ

Психушкăра

"Çут тĕнче" романăн виççĕмĕш кĕнекин сыпăкĕ

/Малалли. Пуçламăшĕ 136-мĕш номерте./

Леш ăмăр этем пуç сĕлтсе "йышăнса юлнă" хушăра вăл халачĕ кĕсйинчен хăлăп евĕрлĕ тимĕр япала кăларчĕ, алăкăн ятарлă шăтăкне чиксе хăйне кирлĕ пек çавăрчĕ. Алăк уçăлсан санитар тухма тăчĕ.

– Тăхтăр-ха! – чарма хăтланчĕ ăна Мишша. – Эсир арпаштармарăр-и?! Чăннипех сирĕн мана çак уйрăма кĕртсе хăвармаллаччĕ-и?

– Арпаштармарăр-и, мĕн-и, – мăкăртатса-витлесе илчĕ санитар. – Тен, сана хĕрарăмсем патне кĕртсе ямалла марччĕ-и?

– Ăслă каларăр вара, – хуравларĕ ăна Мишша.

Чипер пулма хушса хăварса санитар каялла, килнĕ çĕрелле тухрĕ. Шанкăлт! туса юлчĕ алăк çăри ун хыçĕнчен.

Мишша малалла иртме тăхтаса çаплах алăк кутĕнче тăрать-ха: "Чăннипех кунта-ши эпĕ, – шухăшлать вăл, – е тем те пĕр курăнакан хăрушă тĕлĕкре кăна-ши?" Паçăрхи пекех ун умĕне леш этемсем ута-ута иртеççĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсем пăхмаççĕ те çĕнĕ çын çине, интересĕ пĕтрĕ-тĕр. "Пăлханма кирлĕ мар, – хăйне хăй лăплантарчĕ Мишша, – ыранах, ак, тухтăрсем вăл çак этемсем пек маррине курса ĕненеççĕ те – кăларса яраççĕ. Каçару та ыйтĕç-ха çиелтен. Çынсем, вăт, мĕн калĕç, мĕнле пăхĕç Ухмахсен çуртĕнче пулнă Сениэль çине?.."

Коридорăн икĕ енĕпе те темĕн чухлĕ алăк иккен. Унăн пĕр вĕçĕнче чăрече курăнать. Тепĕр енче, пысăках мар зал пеккинче, пĕр ушкăн этем доминолла вылять-мĕн: иккĕшĕ, выляса янисем-тĕр, сĕтел айне кĕрсе ларнă та автанла авăтаççĕ. Мишша каялла çаврăнса чăрече патне пырса тăчĕ. Рамисем икĕ хутлă, вĕсен хушшине тимĕр решетке лартнă. Кантăксем витĕр урамри начар курăнать. "Броньăланă, – пĕтĕмлетрĕ вăл кĕленчине тыта-тыта пăхнă май. Урама каç сăнĕ çапнă пулмалла, çапах та тăйлăк-тайлăк йывăç мĕлкисем, çăллех мар çуртсен юрпа витĕннĕ тăррисем кăшт-кашт курăнкалаççĕ-ха. Кирпĕч хăме çĕр çумне лăпчăннă пек туйăнать палăрми-палăрми сăнлăхра. Çын таврашĕ çук. Урамран пĕр сасчăн те кĕреймест-тĕр шала – Мишша урамалла тĕмсĕлсе пăхса тăракан ансăр та чуна тăвăр коридора. – Мĕнле лекрĕм-ха эпĕ кунта? – аптăраматлипех аптăрать Мишша. – Мĕн тума кирлĕ пулчĕ мана çакă!"

Анчах та хальлĕхе каялла çаврăнса тухмалли çул-йĕр унăн куçне те курăнмарĕ-ха, тăн-пуçне те пырса кĕреймерĕ. Малалли вара паллă: килĕшет-и вăл сана, килĕшмест-и – унпах утма тивет. Шăла çыртса та урапа хытă пусса... Мишша ахаль больницăри палатăсенче выртканала курнă-ха, кун пеккисенче вара тăр килмен: таса мар стенисемпе тем тĕслĕ алăк янахĕсене темĕскерпе чĕре-чĕре çырса пĕтернĕ. Çуллĕ маччара, варринерех сетка-кăшăлпа хуплана лампочка çутатать. Кĕтессенче пур çĕрте те кĕлте пек ерешмен картисем. Тимĕр решеткеллĕ пĕртен пĕр чăрече хуралса ларнă "ют куç" пек, сăнавçă от сывлăш пек курăнать. Стенасем çумĕпе лартса тухнă тимĕр краватьсем çинче ăнланса пĕтмелле мар этемсем; хăшĕ хăма евĕр тăп-тăрĕ, хăшĕ чăмăртанса-хутланса выртнă. Сăтăрăнса якалнă урайĕнче унта та кунта кĕлесĕр тапăчкисем курăнаççĕ. Таçтан... виле шăрши кĕрет.

Мишша, пушă кравать патне пырса, васкамасăр кăна салтăнма пуçларĕ. Пижамине ун хыçне çакрĕ те йывăррăн сывласа илчĕ, кĕрсе выртрĕ. Анчах та выртнă-выртман каялла сиксе тăчĕ, сарăхса пĕтнĕ простыньне сирсе пăрахрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: матрас варринчи тем сарлакăш шăтăкран татăлса-кукрăлса çивĕчленнĕ тутăх панцирь сетки курăнса тăрать. "Мĕскĕнсем, – шеллерĕ Мишша ун умĕн çак йывăр кравать çинче выртса пурăннă телейсĕр те ăраскалсăр этемсене куçĕ умне ўкернĕ май, – ăçта-ши халь вĕсем?.."

– Пижамуна чиксе хур, – кĕтмен çĕртен сăмах хушрĕ юнашар кравать çинче сарлака ал лапписемпе куçне хупласа выртакан этем.

Мишша ăна итлесе сарă тумхаллă матрас шăтăкне пижама курткипе питĕрсе хучĕ, хытса ларнă минтер ăш-чикне кăшт та пулин çемçетме хăтланса пăхрĕ.

– Çутă сўнтерме вăхăт çитмен-ши? – ыйтрĕ кўршĕ çыннинчен ун пекех маччаналла пăхса выртма пуçланă Мишша.

– Палатăсенче сўнтеркĕчсем çук. Пурин те пĕр рубильник, – типпĕн çеç хуравларĕ кўршĕ. – Кунта çутă сўнтермесĕр çывăрмалла: шĕвĕ пуç мимисене кăшт типĕтес пулать...

Анчах та Мишша çутă çутса хунă пўлĕмре ниепле те çывăрса каяймарĕ-ха. Хăнăхман. Ахаль те çап-çутă лампа самантсерен хĕрсе пынăн туйăнать. Унăн куçа курăнми хĕрĕвĕ-пайăркисем алă лапписене шăтарса тухса куç хупанкисене çунтарма, куç шăрçине ирĕлтерме пуçланă пек...

– Хăнăх, хăнăх, яш каччă, хăнăх, тăванăм, – мăкăртатса илчĕ те кўрши ўпне çаврăнса выртрĕ, тахçан хăмăр тĕслĕ пулнă утиял пеккипе пуçĕ çийĕнченех витĕнчĕ. – Кунти йĕркесене хăнăх.

Çапах та ыйхă килмест. Çĕре, ик çĕре çити шутлама хăтланса пăхрĕ Мишша. Шутне çухатсан çĕнĕрен пуçларĕ. Апла та ĕç тухмарĕ-ха. Çакăн хыççăн вăл пурнăçĕнчи ырă самантсене, Хырăшне хир-вăрманне, улăх-çаранне, Киреметайне куçĕ умне ўкерме тăрăшрĕ. Куккук авăтнине, шăпчăксем шарлаттарса юрланине-чаклатнине "итлерĕ". Коридора тухса хуллен кăна уткаласа çўрерĕ. Куçне çамки çине "тавăрса" хурсах хуп турттаракан дежурнăй-санитар умĕне те иккĕ иртрĕ... Палатăна таврăнсан каллех шухăша путрĕ. Йывăр шухăшсем тăрмаларĕç ăна тепĕр авка. Тепĕртакран Мишша, халран кайнăскер, маччари вут чăмăркки сивĕнсе шупкаланма тытăннине туйса илчĕ. Унăн хăвачĕхĕрĕвĕ те таçта кайса кĕчĕ. Калама çук йывăр сывлăша та вăл çăмăллăн çăтать ĕнтĕ, хăй сисмесĕрех тĕлĕрсе кайрĕ...

Ирхине Мишшана темĕнле илемсĕртерех сасă шартах сиктерчĕ: палатăра шыçмак хĕрарăм тем сарлакăш çĕтĕкĕпе енчен-енне çатлаттараçатлаттара урай çăвать иккен.

– А-а, мĕскер эс йăваланса выртан-хе кунта? швабра аврипе шаплаттарчĕ вăл Миншана çурăмĕнчен. – А, ну-ка, тăр! Вырăнна пуçтар!

Мишша çав самантра тенĕ пек сиксе тăчĕ те ĕнерхине, çĕр хута çывăраймасăр нушаланнине, асне илсе ун-кун пăхкаларĕ. "Ку шăтăкра вăрах тытăнса тăрас марччĕ, – хыпăнсах шухăшларĕ вăл лутăрканса пĕтнĕ пижамине васкаса тăхăннă май. Кравать çурăмĕ çинчен кивелсе çĕтĕлнĕ кĕске пит шăлли ярса илсе коридора вăркăнса тухрĕ. Кĕр-кĕрлет кунти "публика", тĕлĕнмелле халăх. Палатăсен алăкĕсен умĕнче, пăлхатнă вĕлле хурчĕ пек, пижамăллă этемсем хĕвĕшеççĕ. Çарапакки те чылай.

– Ăçта çăвăнаççĕ кунта? – ыйтрĕ Мишша пит шăллине майĕнчен çакса таçталла утакан çамрăкран. Лешĕ пĕр чĕнмесĕр туалет енне пуçне сĕлтсе хăварчĕ. Лере – черетмĕн: сарăхса тутăхнă икĕ çăвăнкăç умне тем чухлĕ пижама кĕпĕрленнĕ. Мишша, ĕлкĕрĕп-ха тесе, каялла тухрĕ. Коридор вĕçĕнчи чăрече умĕнче пĕри физзарядка тунине курсан вăл унталла утса кайрĕ. Çывăхарах пырсан ĕнерхи кўршине палласа илчĕ.

– Атя, хăтланкала манпа пĕрле, – терĕ ăна лешĕ, – вăй-хал кирлĕ пулать-ха пире ку хĕсметре, ку касаматра...

Мишша пижама курткипе пит шăллине чўрече янахĕ çине хучĕ те савăнсах хăй юратакан хусканусене тума пуçларĕ. Шăм-шакне çемçетнĕ, хуçкаланнă май, юлташĕ еннелле пăхкалать: спортсмен пулма кирлĕ лешĕ – юлашкинчен чăн-чăн боксер пек "çапăçса" илчĕ.

Çăвăнма кайнă чухне "боксер" Мишша енне аллине тăсса: "Энвер", – терĕ. Мишша та çĕнĕ пĕлĕшĕн аллине чăмăртаса хăйĕн ятне каларĕ: "Михаил, Мишша". Пĕри те, пĕр-пĕрин ятне пĕлнисĕр пуçне, темех ыйтса-туса тăмарĕ. Ăçта ĕçлени, вĕренни е тата урăххи ку çурта лекнĕскерсене пĕрне те кăсăклантармасть пулмалла. Кама тата мĕн тума кирлĕ халь вĕсен иртнĕ пурнăçĕ? Мишша, çапах та, çĕнĕ "юлташĕ" енне, çук-çук та, пăхкаласа илет: лешĕн кăкăр-çурăмĕ тĕллĕн-тĕллĕн кăвакарса-шăйрăлса пĕтнĕ. Куç айĕсем хунар евĕр "çутатаççĕ". Тути-çăварĕ таврашĕнче те йĕрсем. Хытă хĕнени куç кĕрет. Санитарсем тапкă тунăши "хăйне пысăка хунăшăн"?

Çăвăннă хыççăн ирхи апата пуçтарăнма пуçларĕç: пит шăллине çакма кĕрсен леш хĕрарăм Мишшана çурăмĕнчен йĕпе çĕтĕкпе çатлаттарчĕ. Энвера лектереймерĕ – вăл швабрăна картлаттарса туртса илсе коридора пăрахса хăварчĕ. Столовăй пеккинче ик енчи стена çумĕпе те тăсăлакан йывăç сĕтел хушшине "отделени" çыннисем хĕсĕнкĕн те тăкăскăн ларса тухнă. Хăйсен ирхи паекне – йўçĕхнĕ çупа пăтратнă урпа пăтти, пăтранчăк чей тата пĕр татăк çăкăр – кĕтеççĕ. Мишша та, кĕтсе илсен, ыттисенчен курмалăх мĕн панине веçех çисе ячĕ. "Мана та халь нихçанхинчен кирлĕрех вăй-хал тени", – шухăшларĕ вăл Энвер хăйĕн тирĕкĕ тĕпне юлашки çыртăк çăкрипе сăтăра-сăтăра тасатнине пăхса ларнă май.

Апатран тухнисем пурте коридора пухăна-пухăна тăнă. Санитарсем те улшăннă-мĕн – урăххисем çўреççĕ. Коридорта шур халат тăхăннă çўллĕ те платна хĕрарăм курăнса кайрĕ. Хăйне мĕнле тытнинчен, мĕнлерех пăхса уткаланинчен Мишша ку этем, ку "Урал тăвĕ" ахаль сестра кăна маррине тўрех ăнкартса илчĕ. Çавна май унпа каласса пăхас терĕ.

– Каçарăр та, – терĕ Мишша ун патне çитсен, – сиртен ыйтса пĕлме юрать-ши: тĕп тухтăра ăçта курма пулать?

Хĕрарăм ним чĕнмесĕр малаллах утать-ха. Мишша та унтан юлмасть. Пырсан-пырсан вăл ăна тепре чĕнчĕ.

– Хăвăн ухмахла ыйтăвупа тепре çыпăçсан, – сасартăк "каласса" кайрĕ кĕррĕсмеррĕс хĕрарăм, – укол тутарса кравать çумне çыхса хума хушатăп. Ăнлантăн-и, тăмана?!

Ку этемме "ăнланнипе" пĕрлех "Тăмана" çакна та лайăх ăнланса илчĕ: тĕп врачпа тĕл пулма урăх майсем шырамалла. Анчах та мĕнле, мĕнле майсем?! Юнашарти пысăк пўлĕм умне чирлĕ публика, "коллегăсем" кĕпĕрленсе тăнă. Вăл та çав ушкăн патне çывхарчĕ. Алăк анине сĕтел вырнаçтарса лартнă. Унта тăршшĕпех темле эмелсем купаланса выртаççĕ. Патнус çинче шыв тултарнă пластмасса-стакансем. Пухăннисене медсестра пĕрерĕн-пĕрерĕн хăй патне чĕнсе илет те кашнинех пĕрер ывăç тĕрлĕрен таблетка тыттарать. Лешĕн çавна веçех çăварне тултарса симĕс стаканри шывпа пĕрле пуçне хыçалалла тусах ĕçсеçатса ямалла. Чирлĕ этем çав эмеле ĕçнипе ĕçменнине медсестра хăй сăнаса тăрать. Кайран пациента çăварне уçтарса тĕрĕслет: çăвар ăшĕнче пытарса, çăтмасăр ан хăварччăр! Часах Мишшан та черечĕ çитрĕ.

– Çĕнĕ ял! – кĕтмен çĕртен янăраса кайрĕ медсестра сасси. – Синиель! Тен, Сениэль? Пур-и ун пекки!

/Малалли пулать./

Йăла-йĕрке

Чуна уçăлтармалли уяв

Кушарта

Халĕ ял уявĕсем ирттересси çĕнĕрен йăлана кĕрсе пырать. Авалах вĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук асамлă пулнă: кулленхи ĕç-хĕле çут çанталăк календарĕпе çыхăнтарасси, вĕсене чун вăйĕсемпе çăвапласси. Паянхи уявсем вара çак тĕллеве пурнăçлаяççĕ-и?

Тўрех каламалла: ял уявĕсем хăйсен ячĕпех çак тĕллеве пурнăçлама тытăнаççĕ. Акă мĕн çырнă хăй туйăмне палăртса Çавалăн çак тăрăхĕн паллă çăвăçи Иван Ивник:

Çаран йăмри çине шур уйăх утлансан
Чĕремçĕм кăкарта пушар пек вутлансан
Уçăлтарма каяттăм чунăма
Çавал хĕрне – каç лăпкă тăнă май.
/«Çавал çинчи каç», 1934 ç./

Çавал тăрăхĕнчи Кушар Юнтапара çак тăрăхри ялсен уявĕ пулассине илтнипе ман пекех «чуна уçăлтарма» халăх йышлăн пухăнчĕ.

Капăр хăюсемпе, тĕрлĕ тĕслĕ вун-вун хăмпăпа илемлетнĕ клуб, унăн картишĕ, ачалăхпа тачă çыхăннăран-ши, чĕрере ырă туйăмсем вăратрĕç. Хальхи клуб, 70-80 çулсенче кĕçĕн классене вĕрентнĕ шкул çурчĕ пулнăскер, пĕчĕкскерсене капмар та аслă пек курăнатчĕ. Пысăк чўречесем, шапшурă тĕспе сăрланă шкул пире куллен пĕлў çуртне йыхăратчĕ. Хулари пысăк çуртсене курса йăлăхнă куçсемшĕн халĕ вăл пĕчĕк çеç курăнать пулин те çак кун уяв тумĕпе чиперленнĕскер, таврана сăмсана кăтăклакан техĕмлĕ шўрпе шăршипе асамлăн уяв тĕнчине илсе кĕчĕ.

Гвардеецсем

Ярмушка ял тăрăхĕ 8 яла пĕрлештерет: Ярмушка, Пуканкас, Мăн Элмен, Авшак Элмен, Кивçурт Мăрат тата виçĕ Юнтапа – Уйкас, Кушар, Хурапыр. Совет саманинче те вăл пĕр тытăмраччĕ. «Гвардеец» колхоз пĕрлештернĕ хуçалăх çирĕппĕн, тикĕссĕн аталанатчĕ. Районта та, республикăра та тĕрлĕ çитĕнĕвĕпе паллаштармалли, паллă çынсемпе хăпартланмалли пулнă. Хуçалăхсем йăшнă тапхăрта «Гвардеец» икке пайланчĕ. Вунă çул ытла уйрăмшар тапăлтатнă хыççăн 8 ял каллех пĕрлешрĕ. Анчах «уйрăм пурăннă» çулсенче те социализмăн пĕрлехи çуртне купаланă халăх пĕр-пĕринпе яланхиллех хутшăнатчĕ. Кушар каччисем Уйкаса чупнă, Ярмушкасем Кушартан хĕр илнĕ...

Алран кайми

Çуллен иртекен ял тăрăхĕн уявне кăçал тĕп ялта, Ярмушкара мар, Кушарта ирттерме йышăннă. Ярмушкари «Утмăл турат» */сăн ўкерчĕкре/* пултарулăх ушкăнĕ /кунта утмăл çултан иртнĕ çамрăк чунлă хастарсем çўреççĕ/ картишĕнче хатĕрленĕ сцена çинче «Алран кайми аки сухи» юрра янратса ярсан пуçтарăннă халăх ура çине тăчĕ. Пирĕн тăрăхра йăли çавнашкал: кирек мĕнле пулăм пултăр – уяв е чўк, пăтă çиеççĕ е Акатуй уçăлать – чи малтан «Аки-сухине» виçĕ çавра шăрантараççĕ. Халăхăн манăçми гимнĕ вăл. Уява Ярмушка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ЧР тава тивĕçлĕ агрономĕ Алексей Петров уçрĕ. Ырă ĕçпе палăрнисене Тав çырăвĕпе, Хисеп хучĕпе чысларĕç. Культура çулталăкĕнче халăх тăван тăрăхне тирпей-илем, хăтлăх кўме ăнтăлнине палăртрĕ. Вырăнта пурăнакансем çеç мар, ялтан тухнă предпринимательсем те ачалăхри çĕр-шывне манманни, аталантарма тăрăшни чăннипех те савăнтарать.

Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.Петров, район Пухăвĕн депутачĕ Г.Спиридонов, ял тăрăх депутачĕ В.Анисимов уява килнисене саламларĕç.

Пайтаçăсен пуçарулăхĕ

Уйкас Юнтапара кăçал 4-5 çын курăмлă чылай ĕç тунă. Юрийпе Андрей Федотовсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă палăк тавра çĕнĕ карта тытма укçа панă, Николай Захаров хăй шутĕнчен айлăмри çула хăпартса 200 метра яхăн асфальт çул карнă. Сергей Сотников Тури пĕве хĕрринчи çула тикĕслесе çирĕплетнĕ, Лев Раков çава картине çĕнетме укçа уйăрнă. Виçĕ ял çăвине ниме пухса тирпейленĕ, çĕрĕшнĕ картана улăштарнă. Çакă мар-и тăван тăрăха юратма, ăна çĕклеме, аталантарма хавхалантаракан тĕслĕх. «Ыр ут хыççăн пин ут шыв ĕçет» тенĕ халăхăмăр. Тен, ыран теприсем ырă ĕçе хăйсен тўпине хывма мехел çитерĕç.

Уяв Кушар Юнтапара иртнĕ май тĕп тиеве туртма шăпах вĕсене лекрĕ. Ирина Федотова виçĕ уйăхри ачипе пĕрлех шўрпе пĕçерме килнĕ Валентина Хундяковăпа иккĕшĕ хатĕрленĕ техĕмлĕ шўрпене кашниех кăмăл туличчен çисе савăнма пултарчĕ. Валерьян Перепелкин Кушарти культура çурчĕ валли парне – плазмăллă пысăк телевизор – хатĕрленĕ.

Ўркенмен ăста пулнă

Ал ĕç ăстисен курав сентрисем умĕнчен те халăх татăлмарĕ. Хамăр хушăрах пурăнаççĕ вĕсем, асамçăсем. Çăм çиприн çыхса ăсталанă смешариксем, çыхнă кавир-виткĕç, тĕрленĕ ал шăлли тата ыт. те. Пуканкассинчи Зоя Семеновăн вĕтĕ шăрçаран ăсталанă илĕртмĕшĕсем – «Кĕрхи хурăн», «Укçа йывăççи», «Кăвак чечек» – ĕçĕсем ятарлă хаклава тивĕçрĕç. Чун туртсан алă тăвать. Ахальтен каламан: ўркенмен ăста пулнă. Çапах та ал ĕçĕсенче авалтан килекен асамлă чăваш эрешĕсем çухалса пыни сисĕнчĕ.

Мĕн сас лайăх?

Ирхи тăхăр сехетрех вырнаçтарнă батут-керменте ача-пăча сасси чарăнмарĕ. Сцена çинче вара миçе юрă шăранмарĕ-ши çав кун, миçе çын тăпăртатса тĕрĕслемерĕ-ши Кушарсен урайне? Халăх фольклор ушкăнĕсем «Шурăмпуç», «Чашлама», Кушар, Уйкас Юнтапа пултарулăх ушкăнĕсем, Авшак Элмен, Кивçурт Мăрат ялĕнчи шкул ачисем, Çĕмĕрле, Элĕк, Канаш районĕсенчен, Канаш хулинчи «Россиянка» ансамбль, Шупашкар юрăçисем... Пĕрин хыççăн тепри улшăнчĕç юрăсем. Пултарулăх пайне йĕркелесе ертсе пынă Александр Ивановпа Алина Спиридонова халăха хĕвел йывăç тăррисене перĕнченнĕ сцена умĕнчен пистермерĕç. Тавах вĕсене.

Манăçми ятсем

Кашни ялăн, тăрăхăн сумлă çынсем пурах. Кушартан тухнă, халĕ Шупашкарта тĕпленнĕ Людмила Киргизова /Шестакова/, РФ вĕрентĕвĕн хисеплĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ ята тивĕçнĕскер Кушар ялĕн историйĕпе, унти паллă çынсемпе паллаштарчĕ. 1842 çулхи историе «Шурча вăрçи» ятпа кĕрсе юлнă пăлхава пирĕн тăрăх çыннисем хастар хутшăннине пĕлетĕп-ха. 1792 çулта çуралнă, 26 çул хĕсметре тăрса патша тавне темиçе те тивĕçнĕ Кушарти Çитăр мучи – Сидор Семенов – халăха пăлхава çĕкленĕ. Халăх хăй паттăрĕсене асра тытнипе мăнаçлă.

Акă, сăмахран, Авшак Элменрен тухнă Надежда Иванова, РФ вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, доцент, Митта Ваçлей, Иван Ивник премийĕсен лауреачĕ ертсе пынипе ялти çынсемпе калаçса, кивĕ сăн ўкерчĕксене пухса фото-видео архивсем йĕркелеççĕ, ятарлă хаçатсем кăлараççĕ. Çак ялта çуралса çитĕннисенчен нумайăшĕ тĕрлĕ хулара пурăнать пулин те хăйсен ентешлĕх чăмăртанăвне хавхалануллăн ĕлĕкхиллех «Гвардеец» ят панă. Вĕсем ялăн ватăлас сулнăклăхне сирес тесе май çитнĕ таран тăрăшаççĕ. Ял уявĕсем ирттереççĕ, асăнмалăх видео архив йĕркелеççĕ. Паллашас тетĕн тĕк иртнипе, тархасшăн, çыхăн çеç хастар «гвардеецсемпе».

Спорт вăйăйисене ентешлĕхĕн маттурĕ Геннадий Герасимов йĕркелесе пычĕ. Спорт вăйăйисенче Кушарти Павловсен çемйи палăрчĕ. Эпир ача чухнех пĕр ăмăрту та иртместчĕ пулĕ вĕсемсĕр, халĕ те правур.

Кире пуканĕ çĕклерĕç, вĕрен туртрĕç, михĕ тăхăнса сикрĕç, армреслинг, шашка, дартс... Хапăл тăвакана тархасшăн – тĕрĕсле вăй-хална кĕрхи ĕç-çи пуçланиччен. Пиçĕхтер ўт-пўне.

Анчах та ентешсен хастарлăхне урăхларах хаклакан та пур иккен. Авшак Элмен кинĕ Альбина Егорова уявсене пайтаçăсем пулăшнипе сулмаклă та курăмлă ирттернине ўпкелекенсем те пулнишĕн пăшăрханнине пĕлтерчĕ. Çакă, паллах, хастарлăха чакарать. Хурапыртан тухнă Чăваш телерадио хорĕнче нумай çул ĕçленĕ Людмила Кузнецова /Быкова/ та юрăпа савăнтарчĕ уявçăсене, ентешĕсене харсăртарах, ăнтăлуллăрах пулма чĕнчĕ.

Мăн Элмен хĕрĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Надежда Ильина Иван Ивник 100 çул тултарнă ятпа унăн сăввисен пуххине пичетлесе кăларнă. Унта халĕччен пичетленмен нумай сăвă кĕнĕ. «Ивник тенĕрен, халхи çамрăксем пĕлсех каймаççĕ пулĕ-ха. Вăл та хамăр ялах-çке, кукамăшĕ шăпах пирĕн ялтан Мăн Явăша качча тухнă», – сăмахларĕ Уйкас Юнтапа çынни Нина Флегентова.

Мăн Çавал тăрăхĕнчи ялсем çут çанталăк илемĕпе те, историйĕпе те, ĕçĕ-хĕлĕпе те, пултарулăхĕпе те калама çук пуян иккенне куртăмăр ĕнтĕ. Апла пулин те вĕсене упраса аталантармалли куç кĕрет. Çакна тума вара пĕр-пĕрин пуçарулăхĕпе паллашмалла, маттуррисенчен вĕренсе пымалла.

Ентешĕмĕрсен, кунта пурăнакан çынсен те, ку тăрăхран тухса аслă çĕр-шывăмăрăн тĕрлĕ кĕтесне саланнă ывăл-хĕрĕн те «чуна уçăлтармашкăн Çавал хĕрне» – тăван кĕтесне – килсе кайма çăлтавĕ пурах. Тăван çĕре-шыва сума сусан, манмасан тăван ялăмăрсем тĕрекленсе пырас шанчăк кўчĕ уяв.

■ **Эльвира ИВАНОВА**

Усал та тискер

Шупашкарти Калинин районĕн сучĕ 38 çулти арçын тĕлĕшпе приговор палăртнă. Усал та тискер – урăхла калаймăн, çавна май айăплав та самай çирĕп – 10 çуллăха çирĕп режимлă колонире кирпĕч шутлĕ.

Преступлени тĕп хулари Кăнтăр поселокĕнче пулнă. Пĕрле эрех ĕçнĕ май çакскер 34 çулти арçынпа хирĕçсе кайнă. Ăна малтан хăйĕн хваттерĕнче темиçе хут ийĕпе чикнĕ, кăштахран пĕлĕшĕсен хваттерĕнче çĕçĕпе сурансем кўнĕ.

Аманнăскер чўречене çĕмĕрсе тарма тăнă. Преступник вара кантăк ваннине илтнĕ май арçын хваттертен тарнине ăнланнă та урама тухнă. Сурансланнăскер инçе каяйман – чўречене айĕнчех ларать. Ку вара ăна аккинерех, çывăхри гаражсем патне, илсе кайнă, çĕçĕпе каллех тĕрлĕ çĕртен темиçе хут чикнĕ. Хальхинче вилмеллех сурансем кўнĕ. Преступлени йĕрĕсене пытарас тĕллевпе арçын ўтне юр ăшне чавса чикн�с, çĕççине çўп-çап контейнерне ывăтса хăварнă.

Вилле тăватă уйăха яхăн иртсен тин тупнă – çуркунне юр ирĕлнĕ май ăна урамра вылякан ачасем асăрханă.

Н.ДМИТРИЕВ.

Экспедици килет

Пĕтĕм Раççейри халăх фончĕ пуçарнипе çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче, Раççей кунĕнче, Владивостокран «Раççей-2014» экспедици çула тухнă. Унта хутшăнакансем – Халăх фончĕн хастарĕсем, журналистсем тата блогерсем – икĕ уйăхра 15 пин километра яхăн хыçа хăварса çĕр-шывăн 38 регионĕнче, 48 хулинче пулаççĕ.

Экспедици çав хуласенче вырăнти общественноçпа, бизнес представителĕсемпе, ыттисемпе çивĕч ыйтусемпе тĕл пулусем йĕркелеме палăртнă. Çав шутра – Шупашкарта та. Кунта утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче икĕ тĕл пулу иртĕ. 12 сехетре Наци библиотекинче пухăнса инновацăи агротехнологийĕсене ĕçе кĕртес ыйтусене сўтсе явĕç, 14 сехетре Наци музейĕнче тавралăха сыхлассипе çыхăннă темăна тишкерме палăртнă. Унсăр пуçне экспедицие хутшăнакансем ятарлă оборудованипе усă курса Шупашкарти нумаях пулмасть хута янă çулсен пахалăхне тĕрĕслĕç.

Экспедици çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче Севастополте вĕçленет.

К.АНТОНОВ.

Администрация Турмышского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики сообщает о наличии земельного участка для предоставления в аренду:

– земельный участок, категория земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенное использование: для ведения сельскохозяйственного производства, площадь 640 000 кв.м., кадастровый номер 21:26:260501:473, местоположение: Чувашская Республика, Янтиковский район, Турмышское сельское поселение.

Заявления принимаются с 18 июля 2014 года в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, с.Турмыши, ул. Советская, д.14, тел.: 8 /83548/ 2-52-32.

Администрация Шимкусского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики сообщает о наличии земельных участков для предоставления в аренду:

– земельный участок, категория земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенным использованием: для ведения сельскохозяйственного производства, площадь 794200 кв.м., кадастровый номер 21:26:070301:172, местоположение: Чувашская Республика, Янтиковский район, Шимкусское сельское поселение,

– земельный участок, категория земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенным использованием: для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 397100 кв.м., кадастровый номер 21:26:070301:171, местоположение: Чувашская Республика, Янтиковский район, Шимкусское сельское поселение.

Заявления принимаются с 18 июля 2014 года в течение одного месяца по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, с.Шимкусы, ул.Коммунистическая, д.2, по тел.: 8/83548/ 2-03-22, 2-11–34.

ПРОДАЮ

7. Срубы для бани. Т. 37-28-74.

Факс: /8352/ 28-83-70 E-mail: hypar2008@rambler.ru РЕКЛАМА Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пулăм ПĔЛТЕРЎ Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Информационное сообщение

Администрация Яльчикского района Чувашской Республики информирует о возможности предоставления в аренду сроком на 15 лет следующих земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения, предназначенных для ведения сельскохозяйственного производства:

1) площадью 95389 кв.м. с кадастровым номером 21:25:020101:176. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Большетаябинское сельское поселение; 2) площадью 255603 кв.м. с кадастровым номером 21:25:071701:185. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Большетаябинское сельское поселение; 3) площадью 147970 кв.м. с кадастровым номером 21:25:050501:166. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Кильдюшевское сельское поселение; 4) площадью 43500 кв.м. с кадастровым номером 21:25:040101:51. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Кильдюшевское сельское поселение; 5) площадью 816833 кв.м. с кадастровым номером 21:25:110401:694. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Кильдюшевское сельское поселение; 6) площадью 1599444 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2928. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Кильдюшевское сельское поселение; 7) площадью 29918 кв.м. с кадастровым номером 21:25:170101:137. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Сабанчинское сельское поселение; 8) площадью 735223 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2872. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Сабанчинское сельское поселение; 9) площадью 98520 кв.м. с кадастровым номером 21:25:140101:92. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Сабанчинское сельское поселение; 10) площадью 747173 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180701:200. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 11) площадью 913304 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180701:199. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 12) площадью 788430 кв.м. с кадастровым номером 21:25:100101:634. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 13) площадью 207129 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180901:35. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 14) площадью 10613 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180601:199. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 15) площадью 41079 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180502:178. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 16) площадью 49051 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180602:192. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 17) площадью 551792 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2850. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 18) площадью 224763 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2846. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 19) площадью 275462 кв.м. с кадастровым номером 21:25:080401:134. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 20) площадью 435196 кв.м. с кадастровым номером 21:25:180312:352. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 21) площадью 1086950 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2847. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 22) площадью 79017 кв.м. с кадастровым номером 21:25:080401:135. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Яльчикское сельское поселение; 23) площадью 1550930 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2931. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Янтиковское сельское поселение; 24) площадью 755484 кв.м. с кадастровым номером 21:25:000000:2933. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Янтиковское сельское поселение; 25) площадью 1200191 кв.м. с кадастровым номером 21:25:230101:220. Местоположение: Чувашская Республика, Яльчикский район, Янтиковское сельское поселение; 26) площадью 14671 кв.м. с кадастровым номером 21:25:210401:455. Местоположение: Чувашская Республика